Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1939 ЙАНВАР 22 ШАМАТКУН
18 (4831)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 1—46, Дежурнăйĕн 1—21

1905 çулти йанварĕн 9 (22)-мĕшĕ

(ИСТОРИЛĔ СПРАВКĂ)

Историне „Йунлă вырсарникун" йачĕпе кĕрсе йулнă 1905 çулти йанварĕн 9(22)-мĕшĕ 1905 çулти вырăс революцин пуçламĕшĕ пулнă.

1905 çулти йанвар уйăхĕнчи кунсем Петербургри стачкăсен массăллă йухăмĕпе пуçланнă. Ку стачкăсем Путилов заводĕнче пуçланнă. Декабрĕн çурма уйăхĕнче Путилов заводĕнче 4 рабочийе ĕçрен кăларса йанă. Рабочисем ĕçрен кăларнă рабочисене пурпе те кайала ĕçе илме ыйтнă. Завод дирекци рабочисен ыйтăвне пурнăçа кĕртме килĕшмен пирки, йанварĕн 3 (16)-мĕшĕнче Путилов заводĕнче забастовкă пуçланса кайнă.

Путилов рабочисен стачки çумне хулари ытти предприйатисенчи рабочисем пĕрин хыççăн тепри хутшăннă. Йанварĕн 5-мĕшĕнче Францине вырăс компанин заводĕнчи, судносем тăвакан заводри, хут тăвакан фабрикри, механический заводри, çип фабрикĕнчи рабочисем забастовкă пуçласа йанă. Йанварĕн 6—7(19—20)-мĕшĕсенче забастовкă тата вăйлăн сарăлса кайнă, пĕтĕм Петербург хулине йарса илнĕ.

Петербургра талкишпе забастовкă пынă кунсенче „вырăс фабрикĕсемпе завочĕсен пухувĕн" Зубатовла руководителĕсем стачкăсене мирлĕ çул çине тăратассишĕн, май килсен, стачкăна йун айне тума хатĕрленнĕ, патша патне çыру çырма шухăш сарнă. Çак ирсĕр йухăма патша охранкин агенчĕ пуп Гапон йертсе пынă. 1904 çулта Гапон „вырăс фабрикĕсемпе завочĕсенчи рабочисен сойузне" тунă. Çак организаци патша охранки укçи-тенки çинче ĕçлесе тăнă. Сойуз уставне патша правителствин шалти ĕçсен министерстви çирĕплетнĕ.

Йанварĕн 7—8 (20—21)-мĕшĕсенче патша патне çырнă çырува рабочисен нумай пиллĕ пухусенче çутсе-йавнă.

Çырура политикăла ирĕклĕх, политикăла ĕçшĕн хуписене ирĕке кăларма, йĕркелĕ ĕçукçи тума, ĕç кунне 8 сехет тума, çĕре хресченсен аллине пама, пурне те тивĕç тата пĕртан суйлав прави тăрăх учредителни собрани пухма, пур граждăнсене те саккун умĕнче пĕр тан ответлă тума, министăрсене халăх умĕнче ответлă пулма, профессилĕ сойузсене ирĕк цама ыйтнă. Çырува йышăннă хыççăн, рабочисем хăйсен арăмĕсемпе, ачисемпе çырува II-мĕш Микулай патшана пама Зимний Дворец патне кайма килĕшнĕ.

Большевиксем çак вăхăтра пит те пысăк ĕçсем туса иртерни. Вĕсем рабочисене патшаран ирĕклĕх илме çукки çинчен, патша рабочисене персе вĕлерме хатĕрленни çинчĕн, рабочисен хăйсен ыйтувĕсене çырупа мар, алла хĕçпăшал тытса ыйтмали çинчен асăрхаттарнă.

Тепĕр кунне, йанварĕн 9 (22)-мĕшĕнче большевиксем кăтартса панин тĕрĕслĕхне пĕтĕмпех ăнланнă. Çакна ăнланма 1905 çулти йанварĕн 9 (22)-мĕшĕнчи урок кирлĕ пулнă. Патша правителстви рабочисене йун айне тума хатĕрленнĕ. Хăйĕн агенчĕсем, чи малтан çав пуп Гапон урлă рабочисем выступлени тăвассине патша правителстви пĕлсе тăнă.

Йанварĕн 8 (21)-мĕшĕнче правителствă хулана вăрçă чухнехи пек туса хунă, хулана пайсене уйарнă, кашни пайра çар штабĕсем тунă. Патша хулара вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хунин тĕп шухăшĕ çакăнта пулнă: патша рабочисене хулан центрне кĕртесшĕн пулман. Чи малтан кĕперсене, дворцовой плошчĕд патне кайакан урамсене сыхланă. Çав урамсемпе кĕперсем патне çар чăсĕсене нумай илсе пырса тултарнă.

Йанварĕн 9 (22)-мĕшĕнче рабочисем хăйсен арăмĕсемпе пĕрле хăйсен районĕсем тăрăх пуçтарăнма пуçланă. Пурте праçник чухнехи пек тумланнă, савăнăçлă пулнă. Нумайăшĕ иконсем йатса пынă. Пурте пысăк историлĕ ĕç патне кайатпăр тесе шутланă. Çар чăсĕсем пуçтарăннă пулин те, никам та персе вĕлересре кĕтмен.

Йанварĕн 9-мĕшĕнчи йунлă кун çинчен сырнă лухне, В. И. Ленин çак йунлă кунра хăйсем курса илтнĕ хыççăн çырнă йутçĕршыв хаçачĕсен корреспонденчĕсен отчочĕсене илсе кăтартать. Йутçĕршыв хаçачĕсен корреспонденчĕсем 1905 çулта йанварĕн 9-мĕшĕнче патша правителстви тунă тискер ĕçе йар уççăн кăтартса парассĕ.

Англин **„Дейли телеграф"** хаçатăн корреспонденчĕ йанварĕн 9-мĕшĕнче каçхине çакăн пек телеграммă панă: „Вырсарникун, ирхине 9 сехет тĕлне пур кĕперсене те çар чăсĕсем йышăнса илнĕ, кĕперсем патне каймалли урамсене картланă. 11 сехет тĕлне Петербург хули вăрçă чухнехи пек пулнă. Кашни 100—200 чалăшрах çар тăнă, салтаксем кăвайт умĕнче ăшăнса тăнă. хĕçпăшалсем йалтăртатаççĕ, суранланнисем вальни йтлашшипех хатĕрленĕ Хĕрлĕ Хĕрес лавĕсем тăнă. 12 сехетре пĕтĕм халăх уза çине тăнă. Зимний Дворец патне кайнă. Невский урамĕ рабочисемпе тулнă. Йĕркесĕрлĕх, ĕçсе ӳсĕрĕлни палли те çук. Невский урамĕсенчи çуртсен сийĕсенче çамрăксем тулнийех. Сивĕ çил вĕрет пулин те, хватерсен чӳречисем уçă. Епĕр рабочисен „обшчестви" çурчĕ патне карăмăр, анчах вăл хупă. Пур çĕрте те салтаксемпе казаксем. Каменно-островский проспектра епĕр рабочисемпе работницăсен ушкăнне куртăмăр, вĕсем хуллен Троицки кĕперĕ патнелле кайаççĕ. Пурĕ 600 çынна йахăн. Вĕсем савăнăçлă кайаççĕ, пурте йĕркелĕ. Малтанхи 10 çынĕ, йе вуннилĕ кĕшĕ аларан тытса утаççĕ. Епĕр çуна çине тăтăмăр, вĕсем мĕнле кайнине пăхрăмăр. Вĕсем пирĕн çине пăхрĕç, хăйсемпе йĕрле пыма чĕнчĕç. Плошчĕд патне, кĕпер патне çывхарчĕç. Пăшал сасси йанраса кайать. Казаксем йĕркепе тăраççĕ. Акă, вĕсем пурте лăпкă, пурте çывхарса çитекен халăх ушкăнĕ çине тĕллесе переççĕ. Халăх ушкăнĕ чарăнчĕ, хумханчĕ, кайала çаварăнчĕ. Пирĕн пата таракансен, ылханакансен сасси çитрĕ. Утлă казаксем таракансем çине тапăнаççĕ, вĕсене хупăрласа çитереççĕ, вилнисемпе аманнисене пуçтараççĕ".

Тепĕр корреспонденцире çак хаçата çапла çырнă: **„2 сехет те 59 минут.** Дворцовой плошчĕдри халăха салатса йанă. Çар вĕсене хăваласа пырать. Вилнисемпе суранланнисем 150 çын. Вилнисем хушшинче хĕрарăмсемпе ачасем нумай... **3 сехет те 35 минут.** Халăх полиципе çар чăсĕсене хирĕç алла хĕçпăшал тытса тăрать. Пĕр казака вĕлернĕ, пĕр офицер суранланнă. Василеостровскинче халăх пралукран заграждениsем тăвать. Кавалери тапăнса пынипе чарасшăн. **3 сехет те 40 минут.** Дворцовой плошчĕдрен хĕсее кăларнă халăх ушкăнĕ Невский урамĕпе кайала чакать. Çар чăсĕсем кайала чакакансем çине 3 хутчен печĕç. 30 çын вилнĕ, аманнисем нумай. Чакакан халăх урама сарнă чулсене кăларать, офицерсем çине перет... **4 сехет.** Стачечниксем Василеостровскинче баррикадăсем тăваççĕ, йăванса кайнă телеграф йуписене купалаççĕ. **5 сехет те 30 минут.** Василеостровскинче икĕ çĕрте баррикадăсем туса пĕтерне. Салтаксем харăс переççĕ пулсан та, халăх саланмасть. **6 сехет.** Халăх Невский урамĕнче баррикадăсем тума хăтланать. **9 сехет те 45 минут.** Василеостровский тĕттĕмре. Електричествă та, газă та çук. **Каçхине 11 сехет.** Василеостровскинче çаплах пăшал переççĕ. Рабочисем телеграф йуписене çунтараççĕ. Çурçĕр çитнĕ чухне те Василеостровскинче пăшал сассисем илтĕнеççĕ. Рабочисем баррикадăсене тусанах, вĕсене салтаксем çĕмĕрнĕ, 30 рабочийе вĕлернĕ".

„Йунлă кунăн кĕске историйĕ çапла" —тесе çырнă Ленин.

Çак йунлă вырсарникунра вилнисемпе аманнисем пиншер çын пулнă. „Çак граждăн вăрçин аслă урокĕ пулнă"—çапла хак панă 1905 çулти йанварĕн 9 (22)-мĕшĕнчи ĕçсене В. И. Ленин.

Рабочи клас граждăн вăрçин аслă урокне илнĕ, мирлĕ, лăпкă саманара вĕренме уйăх, çулталăк хушши вăхăт кирлине пĕр самантра вĕреннĕ. Халăхсен революцилĕ хумне çĕклес, политикăла тата революцилĕ кĕрешӳве çĕклес ĕçре пысăк вырăнта тăнипе пеллă пулаççĕ те ĕнтĕ 1905 çулхи йанварĕн 9 (22)-мĕшĕнчи ĕçсем.

1905 çулта пулса иртнĕ ĕçсем хыççăн чылай çул иртсен тунă докладра В. И. Ленин 1905 çулти йанварĕн 9-мĕшĕнчи ĕçсем рабочисене ыйăхран вăратрĕç тесе каланă. Йанварĕн 9-мĕшĕнче пулса иртнĕ пĕтĕм ĕçсем Ленинăн çак шухăшне çирĕплетеççĕ. Пĕр кунта, темиçе сехетре массăсен шухăшĕнче гигантла çаврăну пулнă. Ирхине мирлĕ демонстраци пулнă, патша патне çырупа кайнă, ун хыççăн хĕçпăшаллă восстани, каçхине баррикадлă çапăçу пуçланса кайнă. Йанварĕн 9-мĕшĕнче каçхине рабочилĕ Петербург патшана ĕненекен хула мар, революцилĕ центр, 1905 çулхи революцине пуçланă хула пулса тăнă.

Российăри революцилĕ йухăмăн çак кунĕнче ĕнтĕ большевиксем рабочисемпе пĕрле урама тухнă. Вĕсем рабочисемпе пĕрле çар чăсĕсене хирĕç çапăçнă. Большевиксем рабочисемпе пĕрле ăçта май килнĕ çĕрте баррикадăсем тунă, çар чăсĕсене отпор панă. Çак вăхăтран вара ĕнтĕ большевиксен влийанийĕ рабочисем хушшинче вăйлă ӳснĕ. Большевиксем рабочисен массăллă йухăмне йертсе пынă. Тепĕр кунне, йанварĕн 10-мĕшĕнче Петербургран хыпар илсенех Ленин „Российăри революци" йатлă статйа çырнă. Ленин хăйĕн статйинче Петербургри рабочисен йухăмĕ çак кунсенче пысăк утăмсемпе малала кайнине кăтартнă. Стачкăсем талкишпе пулса тăраççĕ, ку вăл халиччен курман-илтмен демонстраци патне илсе пырать. Патша йачĕ пур çĕрте те ниме тăми пулса тăрать, „восстани пуçланать"—тенĕ Ленин. Вăй вăйа хирĕç тăнă. Урамри вăрçă вĕрет, баррикадăсем купаланнă, тупăсем йанранă. Йун йухнă. Ирĕклĕхшĕн граждăн вăрçи пуçланасси куç умĕнчех пулнă. Петербург пролетариачĕ çумне Мускав, Кăнтăр, Кавказ, Польшă хутшăнма хатĕр пулнă. Рабочисен лозунгĕ вилĕм йе ирĕклĕх пулнă. Владимир Илйич Ленин хăй йутçĕршывсенче пурăннă чухне Российăри революци мĕнле сарăлса пынине пит те тимлĕн сăнаса пынă. 1905 çулти йанварĕн 9-мĕшĕнчи ĕçсем çинчен хыпар илсенех, Ленин „Сывă пултăр революци!"—тесе лозунг панă. Çак кун Российăри халăхăн хăватлă революци пуçланса кайнă.

Йанварĕн 10-мĕшĕнче Петербургри рабочисемпе пĕр шухăшлă пулса, Мускаврa забастовкă пуçланса кайнă. Йанварпе феврал уйăхĕнче пĕтĕм çĕршывĕпе стачкă сарăлса кайнă. Кавказри стачкă йухăмне Сталин йулташ йертсе пынă. Ригăра, Варшавăра хĕçпăшаллă çапăçусем пулнă, хуласенче вăрçă чухнехи пек йĕрке тунă. Томскра рабочисен хĕçпăшаллă восстанине Киров йулташ йертсе пынă.

Революцилĕ йухăмăн хăватлă çĕкленĕвĕ пĕтĕм çĕршыва çавăрса илнĕ. Йанварĕн 9-мĕшĕнче Российăра чăн-чăн революци пуçланса кайнă. 1905 çулти йанвар уйăхĕнчи кунсем революцин пĕтĕм хăватне, вăл çурма çул çинче чарăнас çуккине, çак революци патша правителствине çĕç мар, империализăма та çапассине, буржуалă-демократилĕ революци социализăмла революцийе куçассине кăтартнă.

Пайан, йанварĕн 22-мĕшĕнче, 1905 çулхи йанварĕн 9(22)-мĕшĕнче патша çарĕсем Петербургра Зимний Дворец патне петиципе пынă хĕçпăшалсăр рабочисене пĕрсе вĕлернĕренпе 33 çул тулчĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Петроградри Нарвски хапха патĕнче хĕçпăшалсăр рабочисене персе вĕлерни. Авилов художник ӳкерчĕкĕ (ССР Сойузĕнчи Революци Мусейĕ).

Сойузфото репродукцийĕ.

ССР Сойузĕн 1-мĕш созыври Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕ

ССР Сойуз Правителствине тăвасси çинчен

В. М. МОЛОТОВ йулташ сăмахĕ

(Лару Председателĕ Молотов йулташа сăмах парсан, залри çынсем пурте ура çине тăраççĕ, тăвăллăн алă çупаççĕ. Алă çупни овацине куçать, оваци темиçе минута тăсăлать. Вырăнсенчен сасăсем: „Сталин йулташăн чи çывăх оратникне—Молотов йулташа—урра!" тесе кăшкăраççĕ. Тăвăллăн алă çупаççĕ, „Урра!" тесе кăшкăраççĕ).

Депутат йулташсем! Аслă Совет мана Халăх Комиссарĕсен Совечĕн составне çирĕплетме тăратма хушрĕ. Хăйĕн решенинче Аслă Совет, правителствă тăвас ыйту тăрăх превисем пынă вăхăтра депутатсем кăтартса панă критикăлă асăрхаттарусене шута илме сĕнчĕ. Паллах, манăн сĕнӳсем çакăнтан тухаççĕ те ĕнтĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн составĕ çинчен калама пуçличчен малтан, манăн кунта Жданов, Багиров тата Косиор депутатсем аласа панă критикăла асăрхаттарусем пирки чарăнса тăмала пулать. Çав йулташсем хăйсен сăмахĕсенче чылай Халăх Комиссариачĕсен ĕçĕсем çинчен чарăнса тăчĕç, епĕ—вĕсен критикăлă асăрхаттарувĕсемпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пĕтĕмпех килешет, тесе калама ивĕç.

Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн ĕçĕнчи хăшпĕр йенсем пирки тăракан ыйтуран пуçлатăп. Кунта мĕн çинчен кăтартса панăччĕ ха? Жданов йулташ—совет правителстви пурнăçа кĕртсе пыракан мир политикине—пире мирлĕ пурнăç туса паракан политикăна, Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ ăнăçлăн хӳтлесе тата практикăра пурнăçа кĕртсе пыракан политикăна Аслă Совет тата вăл, Ленинград ĕççыннисен представителĕ, пĕтĕмпех хапăл тунине палартрĕ. Анчах вăл тата хăшпĕр ĕçсем çине те кăтартса пачĕ, вăл ĕçсене çак облăçра тĕксĕм йенсем тесе шутламасăр тăма май çук.

Акă, сăмахран, йутçĕршывсен Совет Сойузĕнчи консулĕсем пирки тăракан ыйту.

Йышăнас пулать, çак ыйтупа епĕр йулашки вăхăтченех кирлĕ пек ĕçлесе пыман. Çав вăхăтрах, çак ыйту çине çавăрăнса пăхма тивĕçлĕ тата, паллах, чи малтан Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн çавăрăнса пăхмала. Чăнахта, Совет Сойузĕнче чылай государствăсен йутçĕршыв консулĕсем ытлашшипех пулни палăрчĕ, вăл государствăсем ытти государствăсенчен уйрăм вырăнта пулма, малараха шутланма нимĕнпе те уйрăмăн тăмаççĕ. Йутçĕршыв государствисенчен хăшперисем, вĕсем шутĕнчех тата Совет Сойузĕпе туслă пурăнаççĕ тесе нийепле те йышăнма май çук государствăсенчен те хăшпĕрисем, çав консулствăсене пирĕн патăрта, Совет Сойузĕ вăл государствăсенче тытнинчен тем-терийех нумай тытса тăнă. Ыйту сиксе тухать: мĕнле сăлтавпа ку çакăн пек?

Хăшпĕр йутçĕршыв консулĕсем пирĕн çĕршывра киревсĕр ĕçсем туса пурăнни, совета хирĕç шпионла тата сăтăрçăла йышши тăшманла ĕçсем туса пурăнни те тĕрĕсех. Малашне çакна тем тесен те тӳсме çуках.

Çак ыйтура уçăмлăх пултăр тесе, епĕ çакăн çинчен пĕлтерме тивĕç: кун пирки хăшпĕр ĕçсем туса иртерни ĕнтĕ, Новосибирскпа Одессăра Йапонин икĕ консулствине хупнă. Çавăн пекех тата Харьковпа Тбилисире Польшăн икĕ консулствине хупнă. Ленинградра, Харьковра, Одессăра, Тбилисире тата Владивостокра Германин пилĕк консулствине хупнă. Çаксене ĕнтĕ, йанварĕн 15-мĕш тĕлне пурнăçа кĕртнĕ. Малашне тата ытти чылай консулствăсене хупмала. Италин, Иранăн, Турцин, Афганистанăн, Латвин тата ытти çĕршывсем чылай консулствисене хупмала.

Йутçĕршыв консулствисем пирки Жданов йулташ тунă асăрхаттарусене,—вĕсене пĕтĕм Аслă Совет хапăлларĕ,—Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пĕтĕмпех шута илет тата çывăх вăхăтрах ку тĕлĕшпе мĕн пур кирлĕ ĕçсене туса ирттерет. (Алă çупаççĕ).

Кунта çавăн пекех тата епĕр икĕ государствăпа — Йапонипе тата Франципе мĕнле хутшăнса пурăнни пирки те асăрхаттарчĕç.

Чăн малтанах, епĕр Йапонипе мĕнле хутшăнса пурăнни çинчен тата Йапони правителствипе чăнчăн пуканеле Манчжоу-Гон хăшпĕр чарусăр агенчĕсем хăйсене хăйсем мĕнле тыткалани çинчен.

Есĕр пĕлеттĕр, йулташсем, Совет правителствин Йапонипе Манчжури влаçĕсен хăшпĕр тӳсме çук ĕçĕсене хирĕç пĕр хут мар протест пама тиврĕ. Совет Сойузĕнче никам та Йапонипе Манчжури влаçĕсем йенчен тăвакан чарусăр ĕçсем çине тарăхмасăр пăхма пултараймасть, сăмахран, вĕсĕм инçетхевелтухăçĕнче граждăнла авиацин почтă çӳретекен пĕр самолечĕ пирки çавăн пек чарусăр хăтланаççĕ, вăл самолет çул çинче çухалса кайнă та ăнсартран Манчжоу-Го территорийĕ çине акса ларнă пулнă. Çак факт, пирĕн почтă çӳретекен самолета тытса илнĕ факт, советăн икĕ çыннине—летчикпе унăн помошникне тытса илнĕ—тата çав самолет çинче пулнă пит нумай почтă корреспонденцисене тытса илнĕ факт шăп пĕр уйăх кайала, декабĕрĕн 19-мĕшĕнче пулса иртнĕ. Анчах та Токиора та тата Манчжоу-Гора та пĕр хутчен мар ыйтнисене пăхмасăрах, епĕр çакан пирки Йапони правителствинчен ку таринччене ниме нле пĕлтерӳсем те илеймен-пĕр-ха.

Совет правителствин йанварĕн 16-мĕшĕнче ирĕксĕрех Йапон-Манчжур влаçĕсен киревсĕр те саккунсăр ĕçĕсене хирĕçлесе нотă йамала пулчĕ. Вăл нотăра епĕр, Йапони правителствине—вăл пире ответлă репрессисен çулĕ çине тăма ан ирĕксерлетĕр тесе асăрхаттарса, тытса чарнă совет граждăнĕсене тата самолетпа почтăна халех тавăрса пама тататлăн çине тăрса ыйтатпăр. Йутçĕршыв государствисен çавнашкал тата ытти тĕрлĕрен чарусăрла ĕçĕсене хирĕç Совет Сойузĕн интересĕсене пĕтĕмпех сыхласа хăварма пĕлĕпĕр, тесе шутлатпăр епĕр. Епĕр сире, йулташсем, пирен йенчен тума кирлĕ мĕн пур ĕçсене епĕр чăннипех тăвăпăр, тесе шантарма пултаратпăр. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Епĕр Франципе мĕнле хутшăнса пурăнни çинчен темиçе сăмах каламала. Жданов йулташ асăрхаттарнисем вырăнлă пулнине каллех йышăнмасăр тăма май çук. Чăнах та, хальхи вăхăтченех, Совет Сойузĕпе Франци республикĕ хушшинче туслă хутшăнусем пуррине пăхмасăрах, Франци территорийĕ çинче авантурисемпе преступленилĕ организацисем хăйсене вальни пур майпа та йăпă вырăн тупса пурăнаççĕ, вăл организацисем урăх нимĕн те мар—террориссемпе диверсантсен çĕлен йăвисем çеç пулса тăраççĕ, çавсем Франци влаçĕсен куçĕ умĕнчех тата вĕсем хӳтелесе тăнипе хăйсен совета хирĕç тăшманла ĕçĕсене уççăнах туса пыраççĕ. Паллах, çакна йутçĕршыв çыннисене хӳтлĕх прави панипе тӳрре кăларма йурамасть. Ыйту сиксе тухать: тĕрлĕ йышши преступниксене, вырăсран тата вырăсран мар тухнă буржуалă преступниксене, Франци территорийĕ çинче совета хирĕçле террорла ĕçсем туса пурăнакан тата совет деятелĕсене хирĕç, Совет оргăнĕсене хирĕç уççăнах айапла ĕçсем тума хатĕрленекен преступниксене хавхалантарса пыни кама кирлĕ-ха? Мĕншĕн çав господасене Францире çавăн пек хавхалантараççĕ тата вăл Совет Сойузĕпе Франци хушшинчи туслă пактпа мĕнле килĕшӳлĕ пулать-ха? Çак ыйтура пирĕн Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн ĕçлемелех пулать.

Аслă Совет çак тарăхтаракан тата Совет Сойузне хирĕç пыракан фактсем çинчен шарламасăр иртсе кайма май çук, тесе шутларĕ. Çапла тума унăн пĕтĕм сăлтавсем пулнă тенипе килĕшмесĕр тăма та çук. Аслă Совет Çессинче çак ыйту тăрăх тунă асăрхаттарусене Халăх Комиссарĕсен Совечĕ шута илет тата Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариатне тивĕçлĕ кăтартусем парать.

Кунта çавăн пекех тата ытти Халăх Комиссариачĕсен ĕçĕсене тĕкĕнекен ыйтусене те хускатрĕç.

Жданов йулташ Шывçул транспорт Халăх Комиссариачĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене палартрĕ. Чăнах та, вичĕмçул—шыв тулли пулман çул—хăйăр çине кĕрсе ларнă çĕртен тухас тĕлĕшпе ĕçсем туса ирттерме Шывçул транспорт Халăх Комиссариачĕ вальни вăхăт сахал мар пулчĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çав хăйăр çинчен тухма Шывçул транспорт Халăх Комиссариатне темĕн чухлĕ пулăшрĕ пулсан та, халлĕхе епĕр çакна тума пултараймарăмăр-ха. Шывçул транспорт Халăх Комиссариачĕн руководстви ытла шутсăр йерипен хускалать тата халлĕхе ĕçе кирлĕ пек йусаса йараймасть-ха. Шыв çул транспорт Халăх Комиссариатĕнчи йулташсене çакна астутарар: кĕçех çĕнĕ навигаци пуçланать, вăл тепĕр 2—3 уйăхранах пуçланать. Çак вăл Шывçул транспорт Халăх Комиссариачĕн хальхи руководителĕсемшĕн йулашки испытани пулать. Пахомов йулташăн, Шывçул транспорт Халăх Комиссарĕн, ĕçе тӳрлетме, суднăсене йусас тĕлĕшпе чăннипех ĕçлеме, аварисене хирĕç тататлă кĕрешӳ сарса йама, шывçул транспорчĕ убыткăла ĕçленине пĕтерессишĕн чăннипех ĕçе тытăнма, тата чи кирли—шывçул транспортĕнчи кадрсене суйласа тупас тата вĕсене вĕрентес тĕлĕшпе чăннипех ĕçе тытăнма хаљ те кайа мар-ха Шывçул транспорт Халăх Комиссариачĕн руководствине кунта пысăкăн асăрхаттарчĕç, вăл хăйĕн ĕçне хăварт йу аса йамасан, вара унăн хăйĕннех ӳкĕнмеле пулать. Водник йулташсем,—вĕсем хушшинче лайăх работниксемпе чăн-чăн стахановецсем те сахал мар,—хăйсем çав çитменлĕхсене тӳрлетме пĕлнине кăтартса памала тата 1938 çулта хăйсен ĕçне малта пыракан транспортниксемпе социализмăн чăн-чăн строителĕсене тивĕçлĕ пулмала çĕклесе йамала.

Малала тата кунта пĕтĕмсойузлă виçĕ оргăнăн çитменлĕхĕсене чылай хытăн паллă туса хăварчĕç, вĕсем: Йустици Халăх Комиссариачĕ, Хатерлевсен Комитечĕ тата Искусствăсен Комитечĕ.

Багиров йулташ сăмахне пĕтĕмпех обиективлă тесе йышăнмасăр тăма çук. Вăл Йустици Халăх Комиссарĕ Крыленко йулташ пирки çитменлĕхсене çеç мар, тата вăл альпинисăм, турисăм тата шахмат ĕçе çинчен каласа, лайăх йенĕсене те кăтартса пачĕ. (Залра кулаççĕ). Анчах пĕтĕм ĕç те çавăнта çав: Йустици Халăх Комиссарĕн лайăх йенĕсене палăртнă, анчах пачах Йустици Халăх Комиссариачĕн ĕçĕ йенĕпе мар... А пире Йустици Халăх Комиссариачĕ советăн кăтар-

(Пуçламăшĕ 2-мĕш страницăра).

ССР Сойузĕн 1-мĕш созыври Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çеççийĕ

В. М. МОЛОТОВ йулташ сăмахĕ

(Йулашки)

тулă Халăх Комиссариачĕ пек ĕçлени кирлĕ, вăл Комиссариат çине пирĕн Конституци калама çук пысăк çĕнĕ задачăсем хунă. çакна, кўренмеле пулсан та, Крыленко йулташ ăнланса илмен. Халăх Комиссарĕсен Совечĕн составне çирĕплетнĕ чухне çакна, паллах, шута илмелĕ пулать.

Малала—Хатĕрлевсен Комитетĕнчен тунă Хатĕрлевсен Халăх Комиссариачĕн ĕçĕсĕм çинчен. Косиор йулташ тĕрĕс кăтартса пачĕ: Хатĕрлевсен Комитечĕн руководителĕ пулма Кольцов йулташа лартса,—унăн выранти опыт сахал мар,—епĕр Хатĕрлевсен Комитечĕн ĕçĕсем чылай лайăхланасса шантăмăр. Апла пулсан та, çĕнĕ руководител Хатĕрлевсен Комитечĕн органĕсене унта кĕрсе кайнă тĕрлĕрен сăтăрçăсемпе тĕрлĕрен йăхйахсевчен тасатас тĕлĕшпе хăйĕн обйазаннăçсене те ăнланман. Вăл çак тĕлĕшпе нимĕнле тути-масине пĕлнине те палăртмарĕ, ĕçре хăйне большевик пек кăтартмарĕ. Çапла ĕнтĕ, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн составне çирĕплетнĕ чухне çак факта та шута илес пулать.

Йулашкинчен, Искусствăсен Комитечĕ çинчен. Ун çинчен кунта тухса каласнă депутатсенчен иккĕн каларĕç. Икĕ депутат та Искусствăсен Комитечĕн руководстви çинчен критиклесе каларĕç, анчах, епĕ калаттăм, вĕсен критикăла асăрхаттарнисем чи сахалли çинчен пулчĕç. Искусствăсен Комитечĕн руководстви тĕлĕшпе пирĕн ĕç пĕртте çителĕклĕ тăмасть. Ĕçе тўрлетсе йама епĕр халхи руководителе—Керженцев йулташа мĕн чухлĕ пулăшмарăмăр пуль, хăй вăл чăн-чăн пуçарулăха тата хăйĕн обйазаннăçĕсене ăнланса илнине палăртаймарĕ. Апла пулсан, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн çĕнĕ составне çирĕплетнĕ чухне çавна та шута илме кирлĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн составне вуласа параччен малтан епĕ калас тенĕ асăрхаттарусем çаксем пулчĕç ĕнтĕ, йулташсем.

Халь ĕнтĕ правителствă составĕ çине куçма ирĕк парăр. Епĕ Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ кам пулас ыйту çинче чарăнса тăмастăп, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председател заместителĕсем çине куçатăп.

Хальхи вăхăтра пирĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн икĕ заместител, çав вăхăтрах вĕсем Халăх Комиссарĕсем пулса тăраççĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕн малашнехи ĕçĕн интересĕсемшĕн,—а Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсем пĕрмайах нумайланса пыраççĕ!—епĕ çакăн пек ыйтатăп: Халăх Комисассарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕсем Халăх Комиссариачĕсенчи постсенчен хăтарнăскерсем пулччăрччĕ тата пĕтĕмпех Халăх Комиссарĕсен Советĕнчи ĕçпе ларакансем пулччăрччĕ.

Çавна май, çакăн пек сĕнў паратăп:

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителне Влас Йаковлевич Чубарь йулташа çирĕплетес (тăваллăн алă çупаççĕ), ăна Финанс Халăх Комиссарĕн обйазаннăçĕсенчен хăтарас.

Малала тата çакăн пек сĕнў паратăп—Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителне Анастас Иванович Микойана çирĕплетес (тăваллăн алă çупаççĕ), ăна Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссарĕн обйазаннăçĕсенчен хăтарас.

Çавăн пекех тата çапла сĕнў паратăп—Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн тата тепĕр заместителне Станислав Викентйевич Косиора çирĕплетес, ăнах Совет Контроль Комиççин Председателĕ пулма уйăрса лартас. (Тăваллăн алă çупаççĕ).

Государствă План Комиççи Председателне Николай Алексейевич Вознесенскине çирĕплетме ыйтатăп. (Алă çупаççĕ).

Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарне—Максим Максимович Литвинова. (Алă çупаççĕ).

Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне—Николай Иванович Йежова. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Оборонă Халăх Комиссарне—Климент Йефремович Ворошилова. (Нумайччен тăваллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ, „урра Ворошилов йулташа!", „Сывă пултăр Ворошилов йулташ" тесе хăватлăн кăшкăрни зал тăрăх кĕрлесе кайать).

Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарне—Петр Александрович Смирнова. (Алă çупаççĕ).

Йавăр промышленнăç Халăх Комиссарне — Лазарь Моисейевич Кагановича. (Нумайчен тăваллăн алă çупаççĕ, „Сывă пултăр Каганович йулташ!", „Урра Каганович йулташа!" тесе кăшкăраççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ).

Машиностройени Халăх Комиссарне — Александр Давыдович Брускина. (Алă çупаççĕ).

Оборонă промышленнăç Халăх Комиссарне—Михаил Моисейевич Кагановича. (Алă çупаççĕ).

Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссарне—Абрам Лазаревич Гилинскине. (Алă çупаççĕ).

Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссарне — Василий Иванович Шестакова. (Алă çупаççĕ).

Вăрман промышленнăç Халăх Комиссарне — Михаил Иванович Рыжова. (Алă çупаççĕ).

Чукунçул Халăх Комиссарне—Алексей Венедиктович Бакулина. (Алă çупаççĕ).

Шывçул транспорт Халăх Комиссарне—Николай Иванович Пахомова. (Алă çупаççĕ).

Çыхăну Халăх Комиссарне—Матвей Давыдович Бермана (Алă çупаççĕ).

Çĕрĕç Халăх Комиссарне—Роберт Индрикович Ейхене. (Алă çупаççĕ).

Совхозсен Халăх Комиссарне—Тихон Александрович Йуркина. (Алă çупаççĕ).

Хатĕрлевсен Халăх Комиссарне—Михаил Иванович Попова. (Алă çупаççĕ).

Финанс Халăх Комиссарне—Арсений Григорйевич Зверева. (Алă çупаççĕ),

Суту-илў Халăх Комиссарне—Михаил Павлович Смирнова (Алă çупаççĕ).

Тулашри суту-илў Халăх Комиссарне—Йевгений Денисович Чвйалова. (Алă çупаççĕ).

Йустици Халăх Комиссарне—Николай Михайлович Рычкова. (Алă çупаççĕ).

Сывлăх сыхлавĕн Халăх Комиссарне—Михаил Федорович Болдырева. (Алă çупаççĕ).

Государствă Банкĕн Председателне—Алексей Петрович Гричманова. (Алă çупаççĕ).

Аслă шкул ĕçĕсен Комитечĕн Председателне— Сергей Василйевич Кафтанова. (Алă çупаççĕ).

Искусствă ĕçĕсен Комитечĕн Председателне—Алексей Иванович Назарова. (Алă çупаççĕ).

Йулташсем, Халăх Комиссариачĕсен руководителĕсем çинчен, вĕсен йачĕсене епĕ кунта вуласа кăтартрăм,—уйрăмăн ăнланатарса пама кирлех мар. Есĕр вĕсене унсăрăнах аван пĕлеттĕр.

Есĕр çирĕплетекен Халăх Комиссарĕсен Совечĕ умĕнче пысăк ĕç тăрать, унăн халичченхи пек те мар, тата йăвартарах задачăсене татса памала. Пирĕн ĕç ўсет, пирĕн задачăсем те ўсеççĕ.

Уйрăм Халăх Комиссариачĕсем пирки депутатсем кăтартса панă критикăлă асăрхаттарнисем çинчен епĕ каларăм ĕнтĕ. Халăх Комиссариачĕсен ĕçĕшĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ответ тытать, тенине йышăнмасăр тăма çук, çавăнпа та паллă пулмала, Халăх Комиссариачĕсен ĕçĕ çинчен критикăлă асăрхаттарнисем урăх вицепе Халăх Комиссарĕсен Советне хăйне те пырса тивеççĕ. Асăрхаттарса кăтартса панисене мĕн пур Халăх Комиссариачĕсен тата правителствăн пĕтĕмĕшпех шута илес пулать.

Халăх Комиссариачĕсен çитменлĕхĕсене критиклениие Халăх Комиссарĕсен Совечĕ унăн ĕçĕнче пулăшни пулать, тесе шутлать, малашне те çаплах шутлĕ. Çак критикăран пирĕн вывăд тăвас пулать—апла пулсан, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн вăйсăртарах Халăх Комиссариачĕсене тата ытларах, тата лайăхрах пулăшмала, вĕсен ĕçĕ пирки хăйĕн контрольне вăйлатмала, ĕçлеме пултараймаи руководителсене вăхăтра улăштармала.

Государствăн пысăк посчĕсенче тăракан руководителсен хăйсене мăнна хумала мар йе хăйсемпе лăпланса лармала мар, критикăна тимлесе илтмеле, ĕçре лайăхрах ĕçлекен пулса пымала. Хăйсене мăнна хурса: „Епĕ çўлте тăратăп, çавăнпа та епĕ пурне те куратăп тата пурне те пĕлетĕп",—тенине пирĕн политикăлă суккăрлăх пек, чванствă пек, бўрократисăм пек хаклаcа сивлесе тăкас пулать.

Нумайăх та пулмасть, металлургсемпе горнйаксене йышăннă чухне Сталин йулташ каланă çак чаплă сăмахсене аса илсен, йулташсем, лайăх пулать:

„Совет условийĕсенче руководител пуласси—халăх куçĕ умĕнче пысăк чыспа шанчăка тивĕçлĕ пулассине пĕлтерет... Руководителсем килеççĕ те кайаççĕ, халăх йулать. Халăх кăна вилĕмсĕр. Ыттисем пурте улшăнса пыраççĕ. Çавăнпа та халăх шанăçне пысăка хума пĕлес пулать". (Алă çупаççĕ).

„Халăх шанăçне пысăка хума пĕлес пулать"—çавăн пек Халăх Комиссарĕсен Совечĕн тĕп обйазаннăçĕ, çавăн пек государствă руководителĕсен кашнин тĕп обйазаннăçĕ.

Аслă Совета суйлани тата коммунисемпе партире тăманнисен вăл вăхăтра тĕреклĕннĕ блокĕ пирĕн çĕршывăн историнче, социалисăм историнче çĕнĕ страница уçаççĕ. Коммунисемпе партире тăманнисен çĕнтерўлĕ блокĕ суйланă Аслă Совета пирĕн çапла каламала: епĕр, руководител-коммунисем — пирĕнпе ĕççыннисен партире тăман нумай мĕлйунлă массисем хушшинчи кулленхи чĕрĕ çыхăну мĕн чухлĕ ытларах тата мĕн чул çирĕпрех пурнăçа кĕрсе пырать, пирĕн ĕçри çитĕнў çавăн чухлĕ ытларах пулассине пĕлетĕр. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн патăрта, Совет Сойузĕнче, ĕлĕк пулмăн тата капиталисăм обшчествăна классем çине пайласа тăракан ытти çĕршывсенче çук йăпала пулса тăчĕ—пирĕн патăрта ĕççыннисен влаçĕ çĕнтернĕ викĕс çинче халăхăн моральĕ тата политикăлă пĕрлĕхĕ пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршывра икĕ аслă вăй: халăх тата коммунисăм çыхарса пĕр вăй пулса пĕрлешрĕç. (Тăваллăн алă çупаççĕ).

Çаксем пурте ĕнтĕ пирĕн çине, руководителсем çине, пысăк обйазаннăçсем хураççĕ. Çав обйазаннăçсене ăнланас тесен, пирĕн Аслă Совета депутатсем суйлас кун умĕн Мускаврa Сталинский округри суйлавçăсен пухувĕнче Сталин йулташ мĕн каланине астăвас пулать. Вăл каланă:

„Суйлавçăсем, халăх хăйсен депутачĕсенчен çакна ыйтмала: депутатсем хăйсен задачисен çўлĕшĕнче тăччăр, вĕсем хăйсен ĕçĕнче политикăлă обывателсен картине анса ан ларччăр, вĕсем Ленин сăнарлă политикăлă дейателсен вырăнче тăччăр, вĕсем Ленин пекех йар-уçă та паллă дейателсем пулччăр (алă çупаççĕ), вĕсем Ленин пекех кĕрешўре нимрен хăраман тата халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен çынсем пулччăр (алă çупаççĕ), вĕсем еç йăвăрланма пуçласан, тавракурăмра мĕнле те пулин хăрушлăх паларса тухма пуçласан кирек мĕнле хăраса ўкессрен те, кирек мĕнле хăраса ўкес пеккинчен те Ленин пекех ирĕклĕ пулччăр (алă çупаççĕ), кăткăс ыйтусене татса панă çĕрте пур йенлĕ ориентаци тата пĕтĕм плюссемпе минуссене пур йенчен те учота илмеле çĕрте вĕсем, Ленин пекех, аслă та васкамасăр тăваканcем пулччăр (алă çупаççĕ), вĕсем Ленин пекех тĕрĕс те тўрĕ кăмăллă пулччăр (алă çупаççĕ), вĕсем хăйсен халăхне, ăна Ленин йуратнă пекех, йуратчăр (алă çупаççĕ)".

Сталин йулташ малала тата депутатсен „хăйсен умĕнче аслă Ленинăн аслă сăнарне тытса тăмала тата пур ĕçре те Ленин пек пулмала" тесе каланă. (Шавлăн алă çупаççĕ).

Сталин йулташ çак пысăк требованисене Аслă Совет депутачĕсем умне каларса тăратрĕ. Çаксем вĕсем пĕтĕмпех Халăх Комиссарĕсем патне тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ патне тата ытлараххăн пырса тивеççĕ Пирĕн çакна астăвас пулать: Халăх Комиссарĕсен Советне, ăна туса хунинченех пуçласа Ленин пуçпулса йертсе пынă тата аслă Ленинăн, пирĕн пĕтĕм ĕçĕн никĕсне хывнă Ленинăн тивĕçлĕ ученикĕсем пулма тăрăшас пулать. (Нумайччен шавлăн алă çупаççĕ).

Епĕр пирĕн учителĕн тата Совет Сойузĕнчи халăхсен çулпуçĕн—аслă Сталинăн шанчăклă помошникĕсем пулас тесе тăрăшатпăр. Мĕн пур пысăк та кирлĕ ыйтусенче епĕр, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, канаш ыйтма тата кăтартусем ыйтма большевикла партин Тĕп Комитетне тата, чи малтанах, Сталин йулташ патне пыратпăр. (Шавлă оваци, пурте ура çине тăраççĕ, залран: „Сывă пултăр аслă совет халăхĕн çулпуçĕ аслă Сталин!", „Çулпуçне тата учителе Сталин йулташа—урра!" тесе кăшкăраççĕ).

Есĕр пĕлеттĕр, йулташсем, çакă вăл ăшчикĕпе те формипе те пирĕн аслă Конституципе килĕшўлĕ. (Алă çупаççĕ).

Епĕр пирĕн социалисăмлă халăх парламентне — Аслă Совета тивĕçлĕ пулас тетпĕр, епĕр халăха, хăйĕн ĕçлĕ тимлĕхĕсемпе, хăйулăхĕпе тата творчествăлă хастарлăхĕпе, мĕн пур тата тĕрлĕ чăрмавсене пăхмасăрах, коммунисăмлă обшчествă тăвакан халăха тивĕçлĕ пулас тетпĕр. (Шавлăн алă çупаççĕ).

Йулашкинчен Сталин йулташ сăмахĕсемпе калатăп: „Пире, Тĕпком членĕсене, правителствă членĕсене илес пулсан, пирĕн аслă ĕçшĕн пурăннисĕр пуçне, халăхăн пĕтĕм ырă пурнăçĕшĕн, мĕн пур ĕççыннисемшĕн, мĕлйунлă массăсемшĕн хавасланăх тăвас тесе кĕрешессишĕн пурăннисĕр пуçне—пирĕн урăх пурнăç çук". (Нумайччен тăваллăн алă çупаççĕ, алă çупни овацине куçать. Пурте ура çине тăраççĕ. Сталинпа Молотов йулташсене тăванлă республикăсен чĕлхисемпе саламланисем тата „урра" кăшкăрнисем зал тăрăх кĕрлесе кайаççĕ).

ССР Сойуз Аслă Совечĕн депутачĕсене вальльи Кремльри пысăк дворецра тунă йулташлă апатлану

Йанварĕн 20-мĕшĕнче Кремльри Пысăк дворецăн Георгийевски залĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССР Сойуз Аслă Совечĕн депутачĕсене вальльи тунă йулташлă апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура Аслă Советăн мĕн пур депутачĕсем—совет халăхĕ суйласа йанисем, çĕршывăн йатлă çыннисем Марийа Демченко, Паша Ангелина, Дуçа Виноградова т. ыт социалисăмлă ĕçĕн геройĕсемпе геронисем, Рабочисемпе Хресченсен пархатарлă Хĕрлĕ Çарĕн тата Тинĕс-Çар Хĕрлĕ Флочĕн представителĕсем пулнă.

Апатлану йулташлă кăмăллă лару-тăрура, депутатсем партипе правителствă руководителĕсемпе пĕрлешнĕ атмосферăра пулса иртнĕ.

Зала И. В. Сталин, В. М. Молотов, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилов, М. И. Калинин, А. И. Микойан, В. Й. Чубарь, А. А. Андрейев, С. В. Косиор, А. А Жданов, Н. И. Йежов, Г. И. Петровский, Н С. Хрущчев йулташсем пырса кĕнине депутатсем тăваллă оваци туса тата хавасланса: „Сывă пултăр Аслă Совет депутачĕ Сталин йулташ!", „Сывă пултăр Совет правителствин пуçлăхĕ Молотов йулташ!", „Сывă пултăр Аслă Совет Президиумĕн Председателĕ Калинин йулташ!" тесе кăшкăрса кĕтсе илнĕ.

Молотов йулташ ССР Сойуз Аслă Совечĕшĕн тата Аслă Советăн мĕн пур депутачĕсен сывлăхĕшĕн малтанхи тост калать.

Молотов йулташ Аслă Советăн пĕрремĕш депутачĕшĕн Сталин йулташшăн тост калать. Молотов йулташ сăмахĕсем хыççăн депутатсем нумайччен чарăнма пĕлмесĕр тăваллă оваци тăваççĕ

Молотов йулташ, шавлăн алă çупнă хушăра, Аслă Совет Президиумĕшĕн тата унăн Председателĕшĕн Михаил Иванович Калининшăн тост калать.

Ворошилов йулташăн ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕшĕн тата унăн пуçлăхĕшĕн—Вйачеслав Михайлович Молотовшăн тост калана сăмахĕсене депутатсем хĕрўлĕн алă çупса саламлаççĕ.

Сталин йулташ тухса каланине Аслă Совет депутачĕсем тăваллă оваци туса, хăватлăн „урра" кăшкăрса кĕтсе илеççĕ.

Сталин йулташ граждăн вăрçи пархатарлă геройĕсем çинчен тата вĕсен тăван çĕршыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçĕсем çинчен, пирĕн çĕршывăн чаплă соколĕсем—совет летчикĕсем çинчен, вĕсем хушшинче халь ĕнтĕ Совет Сойуз Геройĕсем те сахал марри çинчен калать.

Сталин йулташ каланă вăхăтра апатланура пулнисем темиçе хутчен те овацисем тунă.

Апатланура Аслă Совет депутачĕсем Совет Сойуз Геройĕсем—Чкалов, Беляков, Байдуков, Хользунов, Черных, Смушкевич йулташсем, ССР Сойузĕн Халăх артисĕ Хорова, иккĕмĕш рангри командарм Кулик сăмахсем тухса каланă.

Вăл сăмахсенче Рабочисемпе Хресченсен пархатарлă Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Хĕрлĕ Флог çинчен асăннине депутатсем хаваслăн кĕтсе илнĕ.

Апатлану вăхăтĕнче концерт пулса иртнĕ, унта: Аслă Совет депутачĕ ССР Сойузĕн Халăх артисĕ И. М. Москвин, тава тивĕçлĕ артис Вербицкий, ССР Сойузĕн Халăх артистки Барсова, ССР Сойузĕн Халăх артисĕ Пирогов, тава тивĕçлĕ артиссем—Михайлов, Златогорова, Козловский, Порцов, музыкант-исполнителсен Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш конкурсĕн лауреачĕ Полонский, çавăн пекех тата Хĕрлĕ Çар йуррисемпе ташшисен ССР Сойузĕн Халăх артисĕ орденоносец профессор Александров йертсе пыракан Хĕрлĕ йалавлă ансамблĕ хутшăннă.

(ТАСС).

◆ ★ ◆

Рубцова бригади мала тухассишĕн кĕрешет

Христина Рубцова—Канашпа Шупашкар хушшинчи чукун çул строителствинче, 8-мĕш участкăра бригадир пулса ĕçлет. Унăн бригадинче 5 çын. Бригадă çак уйăхра плана 120 процентран кайа мар тултарассишĕн кĕрешет. Бригадă членĕсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. П. Василйевăпа Х. Рубцова йулташсем чукун çул строителствинче çула туса пĕтеричченех ĕçлеме пулаççĕ.

Х. Рубцова—комсомолка. Ĕçре йаланах ытти рабочисене вĕрентет.

С. Тарасов.

Чăптаçă-стахановецсем

Шăхасан. Йамашри „Стахановец" промысла ертелĕнчи стахановецсем ĕçре çĕнĕ çитĕнўсем туса пыраççĕ. Никита Артемйев ертелте 9 уйăх çеç ĕçлет. Чăпта çапас ĕçе вăл йаланах лайăх пахалăхпа туса пырать. 9 уйăх хушшинче Артемйевăн 1500 стандартлă чăпта çапса кăлармала пулнă пулсан, вăл 3.427 чăпта çапса, плана 228 процент тултарчĕ.

Артемйев йулташ лайăх ĕçленĕшĕн пĕрре кăна мар парнесем илнĕ.

Феодор Тулубайев та план тăрăх 1500 чăпта çапмала пулсан, 2200 чăпта çапса кăларать. Унăн та чăпта пахалăхĕ аван.

Ал. Иванов.

Ленинисăмăн чаплă çĕнтерĕвĕ

(В. И. Ленин вилнĕренпе 14 çул тултарнă тĕле)

14 çул кайарах револьуцин аслă генийĕ Ленин вилчĕ. анчах Ленинăн чи çывăх соратникĕ — Сталин йулташ йертсе пынипе Ленин ĕçĕ пурăнать, чечекленет, çĕнтерсе пырать. Йăвăрлăхсене çĕнсе, тăшмансене çĕмĕрсе, епĕр çĕнтерсе пыратпăр, мĕншĕн тесен, йаланах ленинисăма тĕрĕссĕн тытса пыратпăр, мĕншĕн тесен, социалисăм çĕршывне аслă Сталин пĕр пăркаланмасăр, пĕтĕм вăйпа тăрăшса, çирĕппĕн те шанчăклăн Ленин çулĕпе илсе пырать.

* * *

Ленин хăватлă та пултарулă социалисăмлă Российă çинчен ĕмĕтленнĕ. Ленин Мускав совечĕн пленумĕнче каланă хăйĕн йулашки сăмахне чăннипех те историлĕ чĕнўпе пĕтерчĕ: „...непла Российăран социалисăмла Российă пулать".

Социалисăм патне çитме, хўт те мĕнле пулсан та социалисăм патне çитме тата ăна туса çитерме,—çакна тума пирĕн пурте пур. Сталин йулташ йертсе пынипе парти пирĕн çĕршывра социалисăм туса çитерессин ленинла программăна пурнăçларĕ. Тăшмансене çĕмĕрсе тăкмалах çапса, парти буржуазин троцкисла бухаринла агентурин ресталраторла, капитулйантла сăн-сăпатне тăрă шыв çине кăларчĕ. Шпионла, диверсиле ĕçсем туса пырса, троцкиссем, зиновйевцăсем, бухаринцăсем ĕççыннисем хушшинче хăйсен вăйне шанманлăха сарма пăхрĕç, вĕсене пассивлатма тата ĕçлемесĕр пурăнтарма, çапла майпа капиталисăма ĕçлеме вырăн уçса пама хăтланчĕç.

Сталин йулташ, буржуазиле, контрреволюциле теорийе—пĕр çĕршывра социалисăм çĕнтерме пултараймасть текен теорийе çĕмĕрсе тăкрĕ, пĕр çĕршыврах социалисăм тăвасси çинчен Ленин вĕрентнине нумай хут пуйанлатрĕ. Сталин йулташ аслă строителствăна хутшăнма массăсен пуçарулăхне чĕртрĕ. Социалисăм строителствин ленинла-сталинла программине пурнăçа кĕртнĕ.

Ленин вилсен, Сталин йулташ аслă историлĕ тупатуса каларĕ. Çав тупатуние ĕçе кĕртнĕ: Сталин йулташ сăмахĕ пурнăçланнă.

Социалисăмла обшчествăн аслă çуртне ССР Сойузĕнче туса лартнă. çынна çын пусмăрлассине йаланлăхах пĕтернĕ. Пирĕн государствăн економикăла никĕсĕ социалисăмла харпăрлăх пулса тăрать. Социалисăм пирĕн çĕршывра йаланлăхах тата татăклăнах çĕнтерчĕ. Социалисăм вăл—ĕнтĕ ĕмĕт мар, пурăнçланă ĕç, социалисăм—пирĕн пурнăç, социалисăм — Сталинла Конституци.

* * *

Халăх хуçалăхне социалисăмла çĕнетсе улăштарассиче йăвăр индустри тĕп никĕс пулса тăрать. Йăвăр индустрисĕр епĕр никама та пăхăнмасăр пурăнакан çĕршыв пулса пурăнаймастăмăрчĕ, социалисăм тума пултараймастăмăрчĕ. тесе вĕрентнĕ пире Ленин. Сталин йулташ çĕршыва индустриализацилес ыйту тавра пĕтĕм партине, пĕтĕм халăха пĕтĕçтерчĕ. Партин XIV-мĕш сйесĕнче 1925 çулта, Сталин йулташ индустриализацилес ĕçĕн историлĕ программине, ССР Сойузне техникăпа економикă тĕлĕшĕнчен никама пăхăнмала мар тăвас ĕçĕн программине каласа пачĕ.

Сутăнчăксем, двурушниксем, шпионсем, вредителсем Троцкий, Бухарин, Рыков, Зиновйев, Каменев, Пйатаков тата вĕсен йышши ирсĕрсем индустриализацилес ĕçĕн сталинла программине пурнăçа кĕртессине чарса лартас тĕлĕшпе пĕтĕм вăйран тăрăшнă.

Буржуази лазутчикĕсем империалисăм умĕнче пирĕн çĕршыва хĕçпăшалсăр тăратса хăварма, пирĕн çĕршывра капиталисăма кайала тавăрассине хатĕрлеме шутланă.

Вĕсен ирсĕр планĕсене Сталин йулташ тăрă шыв çине кăларчĕ.

Совет çĕршывĕ утса тухнă историлĕ çулйĕрне пăхсан, хамăр çĕршыва индустриализацилессине хăй вăхăтĕнче пурнăçа кĕртесси йепле кирлĕ пулнине татах та тата куратпăр. Большевиксен партийĕ йертсе пынипе ССР Сойузĕн ĕççыннийĕсем кĕске вăхăтрах вăйлă йăвăр индустри тума пултарчĕç, вăл пирĕн çĕршыва оборонă тĕлĕшĕнчен пур кирлĕ ĕççене тума май пачĕ. Совет индустрийĕ пирĕн Хĕрлĕ Çара тата Тинĕс-Çар флотне кирлĕ чухлĕ аероплансем, танксем, чи чаплă хĕçпăшалсем парать. Совет индустрийĕ коллективланă йалхуçалăхне çĕршерпин тракторсем, нумай комбайнсем, автомобилсем, пысăк йалхуçалăх машинĕсем парать. Пирĕн промышленнăç хăй кăларакан продукци хисепĕ тăрăх халĕ вăрçăчченхинчен 8 хут пысăкрах. 1938 ç. пĕр Магнитогорскри завод кăна Польшăри пĕтĕм металлурги завочĕсем кăларнă хисепрен икĕ хут ытларах чукун панă.

Çав çултах Магнитогорскрипе Кузнецкри заводсем Йапонири пĕтĕм заводсем кăларнă хисепрен 30 процент ытла чукун кăларнă. Пĕтĕм промышленнăç продукцин тăватă пайран виççĕ пайне совет влаçĕ тунă, йе пĕтĕмпех тĕпрен улăштарса йусанă заводсем кăлараççĕ. Пирĕн социалисăмла промышленнăç продукци кăларас тĕлĕшпе Йевропăри пĕрремĕш вырăна тухрĕ.

Чухăн, вăйсăр пулнă çĕршыв хăватлă, пуйан, социалисăмла çĕршыв пулса тăчĕ.

* * *

Ленин рабочисемпе хресченсен сойузне çирĕплетме ывăнма пĕлмесĕр вĕрентнĕ. Унта Ленин совет стройĕн никам çĕнтерме пултарайман вăйне курнă.

Советсен Пĕтĕм Сойузри 2-мĕш сйесĕнче каланă сăмахĕнче Сталин йулташ пĕтĕм парти йачĕпе рабочисемпе хресченсен сойузне пур майсемпе те çирĕплетме тупатунă. Ленин—Сталин партийĕ, троцкисла-бухаринла бандă рабочисемпе хресченсен сойузне аркатма хăтланнине çĕмĕрсе тăкрĕ. Рабочисемпе хресченсен сойузне çирĕплетсе, парти унта рабочи класăн йертсе пырас рольне турĕ. Парти хресченсене социалисăм çулĕпе илсе пычĕ, хресченсене хуçалăха коллективлă тытас ĕç çине куçарма хатĕрлерĕ. Ленин вилнĕ чухне, пирĕн колхозсемпе совхозсем вак хуçалăхсен океанĕнчи пĕчĕк утравсем пек çеç пулнă. Çак иртнĕ 14 çул хушшинче пит те пысăк çула утса тухнă. Пирĕн парти çине тăрса, тăрăшса ĕçленипе, хресченсене пĕрмайах пулăш-

ССРС ĕççыннисем Аслă Совет Çессине саламлаççĕ

Н. Й. АСТАХОВА йулташ сăмахĕ

Мускаври Радищев йачĕпе тăракан шкул учительници)

(Мускаври рабочисен, работницăсен тата интеллигенцин, Мускав облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен делегацине тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ).

Йулташсем, Аслă Совет депутачĕсем! Епĕр, Мускаври тата Мускав облаçĕнчи рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, наукă, искусствă работникĕсемпе техникĕсем тата пĕтĕм ĕççыннисем сире, халăх суйланă çынсене; социалисăмлă парламент депутачĕсене çуламлăн саламлатпăр! **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. „Урра!" тесе кăшкăраççĕ).**

Епĕр хамăрăн совет парламĕнчĕпе мухтанатпăр, унта халăх тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене, Ленин—Сталин партийĕ пăхса ÿстернĕ чаплă çынсене суйланă. **(Алă çупаççĕ).**

Йулташсем, депутатсем, ĕççынни массисемпе пите тачă. нихăçан уйăрăлми çыхăннă парламент тĕнчере урăх пур-и?

Пирĕн депутатсем—пĕтĕм халăхăн уйăрăлми пайĕ, вĕсен ĕçĕсем, шухăшĕсем, малалахи ĕмĕчĕсем,—вĕсем пирĕн тăван çĕршыври пĕтĕм ĕççыннисен ĕçĕсем, шухăшĕсем, ĕмĕчĕсем. **(Алă çупаççĕ).**

Кун пек парламент пĕр капиталисăмлă çĕршывра та пулман. çук. пулма та пултараймаст.

Буржуалă парламентсенче пур депутатсем те, коммунистсемсĕр пуçне, халăхран пит инçе уйăрăлса тăраççĕ. Вĕсен парламенчĕ буржуази аллинчи хĕçпăшал, ĕççыннисене улталамали тата чурара тытса усрамали хĕçпăшал пулса тăрат.

Есĕр, Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн Аслă Совечĕн депутачĕсем, пĕтĕм халăх депутачĕсем, коммунистсемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми блокĕн депутачĕсем пулса тăраттăр. **(Алă çупаççĕ).**

Епĕр, Мускав ĕççыннисем, пирĕн хулана Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн Аслă Советне хамăр депутата, пирĕн учителе тата туса, пирĕн тăван Сталин йулташа суйлама телей тухнипе мухтанатпăр, çакăншăн телейлĕ пултăмăр. **(Сталин йулташа чысласа нумайччен алă çупаççĕ,тăвăллă овацине куçат.Пурте ура çине тăраççĕ. „Урра Сталин йулташа!", „Сывă пултăр Сталин йулташ!" тесе кăшкăраççĕ).**

Аслă Советăн пĕтĕм халăхпа суйланă депутатне, аслă Ленинăн ĕçне генилле малала илсе пыракана, ĕççыннисене телей кÿрсе панă çынна хамăрăн чи лайăх туйăмсемпе шухăшсене ,хамăрăн вĕсĕмсĕр йуратнă сăмахсене паратпăр, ун çине мĕн пур малта пыракан тата прогрессивлă етемлĕх пăхса тăрат. Вăл çынăн йатне пĕтĕм тĕнче пĕлет. Вăл тăван, йуратнă йат—Сталин! **(Сталин йулташа чысласа нумайччен тăвăллăн оваци тăваççĕ).**

Епĕр хамăрăн ленинла—сталинла çулпа пĕр-пайланмасăр тÿрĕ пыракан тăван Совет правительствине саламлатпăр. Епĕр унăн тĕрĕсленнĕ руководителне, пирĕн Сталинăн хастар соратникне, ĕççыннисен телейĕшĕн кĕрешекене—Вячеслав Михайлович Молотова саламлатпăр. **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. „Сывă пултăр Молотов йулташ!", „Урра!" тесе кăшкăраççĕ).**

Епĕр хамăр тăван çĕршывăн çĕнĕ правительствине, ленинла-сталинла правительствăна хĕрÿллĕн саламлатпăр. Пултаруллă, вăл çĕнĕ, анчах тата вăл кивĕ правительствă та, вăл ленинла-сталинла правительствă пулнă, халĕ те ленинла-сталинла правительствă пулĕ. **(Пĕтĕм зал шавлăн алă çупат. Пурте ура çине тăраççĕ. „Урра!" тесе кăшкăраççĕ).**

Йулташсем, Çĕççи йышăннă кашни решени пирĕн тăван çĕршывăн хăватне тата аслăлăхне ÿстерме пулăшат.

Йулташсем, Аслă Совет депутачĕсем, сирĕн решенисем пĕтĕмĕшпех халăх ирĕкне палăртса тăраççĕ, сирĕн шухăшсем —халăх шухăшĕсем, сирĕн решенисем—халăх решенисем.

Мускав çине, Кремль çине мĕн пур ĕççыннисем тимлĕн пăхса тăраççĕ. Çĕççире калана кашни сăмах нумай нацилĕ мĕн пур совет халăхĕн чĕрисене тата шухăшĕсене чĕррĕн хускатса йарат. **(Алă çупаççĕ).**

Есĕр Çĕççире тухса калаçнисем Совет Союзĕн тăшманĕсене те, тусĕсене те—пурне те —пирĕн çĕршыв вăрçăшăн мар-рине, çапах та вăл вăрçă пуçаракансене кирек хăш вăхăтра та пире çапнине хирĕç аркатса пăрахмалăх çапçине ответлеме, тата социалисăм çĕршывĕн таса чиккисем çине алă хума хăйакансене пурне те арпа-кĕрпе пек çапса салатма хатĕррине татах та татах тепĕр хут аса илтерет. **(Пĕтĕм зал тăвăллăн алă çупат).**

Йулташсем, есĕр Çĕççире тухса калаçнисем халăх хăйĕн Рабочисемпе Хресченсен тăван Хĕрлĕ Çарне, хăйĕн Тинĕс Çар флотне йуратнине, хăйĕн совет çĕрне троцкисла-бухаринла шпионсенчен, диверсантсенчен, сăтăрçăсенчен, отем общества мĕн пур кайашĕсенчен тасатакан мухтавлă карательнăй органĕсене йуратнине тата пулăшса хуга кĕнине татах та татах тепĕр хут пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕç.

Халăх тăшманĕсем чикĕ-тулашĕнче те, çĕршывра та чĕтресе тăччăр.

Сталинла икĕ пиатилеткăна çĕнтерÿлĕ пурнăçа кĕртнĕ, хăватлă индустри тата малта пыракан йалхуçалăхĕ тунă, хăйĕн тăван çĕршывне социалисăмăн хăватлă та хайар, никам çĕнтерейми крепăçĕ туса хунă халăх никам çĕнтерейми хăватлине тăшмансем пĕлсе тăччăр. **(Нумайччен алă çупаççĕ).**

Пирĕн халăх хăйĕн Октябĕрти революцире кĕрешсе илнĕ аслă çĕнтерÿвĕсене никама та, нихăçан та парас çуккине, аслă çĕнтерÿсемшĕн кĕрешсе çĕнсе илнисене çырса çирĕплетсе хунă аслă Сталинлă Конституци çине алă çĕклеме никама та, нихăçан та ирĕк парас çуккине тăшмансем пĕлсе тăччăр. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Правителствăпа халăх пĕр-пĕринчен уйăрăлман, пĕр-пĕринпе уйăрăлми çыхăннă çĕршыва, большевикла парти пĕр çĕнтерÿрен тепĕр çĕнтерÿ патне йертсе пыракан çĕршыва, партин ленинла-сталинла Тĕп Комитечĕ тавра, хăйĕн аслă çулпуçĕ Сталин йулташ тавра пĕр çын пек пĕтĕçнĕ çĕршыва никам та çĕнтерейместь **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ. „Урра!", „Сывă пултăр Сталин йулташ!" тесе кăшкăраççĕ).**

Пирĕн совет стройĕн вăйĕ тата ăна никам çĕнтерме пултарайманни Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин йалавĕпе тăччăн пĕтĕçнĕ нумай нацилĕ совет халăхĕн никам çĕнтерейми морально-политикăлă пĕрлĕхĕнче пулат. **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Мускав тата орденлă Мускав облаçĕн ĕççыннисем—есĕр, ССР Союзĕн Аслă Совет депутачĕсем, Ленинăн—Сталинăн аслă йалавне çÿле тытса тăраса, халăх панă наказа асра тытса тăраса хĕрĕпĕн шанаççĕ.

Массăна тачă çыхăну тытăр, мĕншĕн тесен, халăхпа çыхăну тытнипе совет халăхĕн вăйĕпе никам çĕнтерейменлĕхĕ пулат. **(Алă çупаççĕ).**

Сывă пултăр совет правительстви—пĕтĕм халăх çине тайанакан тĕнчери чи демократиллĕ правительстви!

Сывă пултăр никам çĕнтерейми Коммунистсен партийĕ тата унăн ленинла-сталинла Тĕп Комитечĕ! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Нумай мĕлйунлă, нумай нацилĕ мĕн пур совет халăхĕн мораль-политикăлă пĕрлĕхĕн символĕ пулса тăракан—пирĕн тăван, йуратнă Сталин сывă пултăр! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ, „урра!" кăшкăраççĕ. Пурте ура çине тăрса Сталин йулташа чысласа тăвăллăн оваци тăваççĕ).**

Н. Н. ГЕРАСИМОВ йулташ сăмахĕ

(Мускаври Пролетарилĕ Хĕрлĕ йалавлă стрелковой дивизин капитанĕ)

(Фанфар сассипе зала Хĕрлĕ Çарпа Флот делегацийĕ кĕрет, трибуна патне пырса йĕркеленсе тăрат. Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. „Урра!" тесе кăшкăраççĕ).

Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн Аслă Совечĕн депутачĕсене, халăхăн чăн-чăн шанса суйланă çыннисене,—пирĕн Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă та чаплă Хĕрлĕ Çарĕн боецĕсенчен, командирĕсемпе политработникĕсенчен — краснофлотецсенчен çуламлă салам! (Тăвăллăн алă çупаççĕ. Выранĕсенчен: „урра!", „Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар!" тесе кăшкăраççĕ).

Хĕрлĕ Çар уйрăмăнах Аслă Советăн пĕрремĕш депутатне, аслă çулпуçа тата учителĕ Иосиф Виссарионович Сталина саламлат.

(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Выранĕсенчен Сталин йулташа чысласа саламлана сăмахсем йанăраççĕ).

Хĕрлĕ Çар пирĕн чечекленсе ÿсекен тăван çĕршывăн политикăлă пурнăçĕнче активлă хутшăнса ĕçленипе саванса мухтанат. Боецсемпе командирсем170 мĕлйунлă совет халăхĕпе пĕрле, тĕнчере чи демократилĕ Сталинла Конституци тăрăх Аслă Совет суйлавĕсенче хутшăнса ĕçлерĕç. Хĕрлĕ Çар хăйĕн сасĕсене коммунистсемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми блокне пачĕ.

Совет правителствин пĕтĕм тĕнчери тата шалти политикишĕн, тăван аттемĕршĕн тата тусăмăршăн—Сталин йулташшăн вăл пĕркăмăллăн сасăларĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. „Урра" тесе кăшкăраççĕ).

Йулташсем, пирĕн социалисăм çĕршывĕнчи пек, тĕнчери урăх нихăш çĕршывра та çар суйлав правипе усă курмаст. Капиталисăмлă çĕршывсенче çара халăха хирĕçле тăратнă, ăна рабочисемпе хресченсене путарас шутпа çĕç тытса тăраççĕ. Совет Союзĕнче çĕç çар па халăх пĕрлĕхлĕ. (Алă çупаççĕ):

Пирĕн çар ĕççыннисен чи çывăх интересĕсене хÿтĕлесе, социалисăм ĕçĕсене хÿтĕлесе пурăнат.

Аха мĕншĕн Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тĕнчере чи хăхатлă çар пулса тăрат. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ). Пур çĕршывсенче те, пирен совет çĕршывĕсĕр пуçне, çар пуçĕнче експлоататорла классен представителĕсем тăраççĕ, капиталиссемпе помещиксен представителĕсем, графсем, герцогсем тата баронсем тăраççĕ, — капиталисăмăн пĕтем йатлă çынĕсем çарта йертсе пырас çĕрте тăраççĕ. Мĕн пулма пултартăр-ха вĕсен халăхпа пĕр пекки, салтаксемпе пĕр пекки? Нимĕн те. Çарне хăйне те унта хăйсен халăхне пусмăрлама, йут территорисене туртса илме, вăйсăррисене чуралантарма, телейсĕррисене ирĕксĕрлеме, пуçпулса таракансене кирлĕ майан тытса тăраççĕ. Капиталисăмлă çарта офицерпа салтак хушшинчи класлă хирĕçÿсем нихăçан та килĕшме пултараймаççĕ.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне йертсе пыма совет халăхĕн ирĕкĕпе Луганск слесарне—Климент Йĕфремович Ворошилова (пурте ура çине тăраççĕ, нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, алă çупни овацие куçат),—Ленин—Сталин партийĕн çирĕп ывăлне лартнă. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Хĕрлĕ Çар, мĕн пур боецсем, командирсемпе политработниксем хăйсен çулпуçне, тимĕр Наркома тата хĕрлĕ кăмăллă та çичĕмĕлĕ йулташа — Климент Йĕфремович Ворошилова хĕрÿллĕн йуратаççĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Пирĕн командирсемпе политработниксем — пĕтĕм чуне-черипе аслă ĕçхалăхĕнчен тухнăскерсем, унăн хăйулă та паттăр ывăлĕсем. Вĕсем полксемпе, дивизисемпе, корпуссемпе, çар ĕçсемпе командовать тăваççĕ. (Алă çупаççĕ).

Тăван большевикла парти йертсе пынипе пирĕн командирсемпе политработниксем политикăлла воспитани ленинла-сталинла шкулĕ витĕр тухрĕç, çарăн кăткăс техникине тата тактикăлă искусствăна алла илес тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем турĕç. Хĕрлĕ Çар ретĕнче Совет Союз Геройĕсем вуншарăн шутланаççĕ, пиншер боецсем тата командирсемпе политработниксем ССР Союзĕн орденĕсене илнĕ. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн тăван, никам çĕнтерейми Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнчи пек командирсемпе боецсем тĕнчере урăх нихăш çарăн та çук. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ никам хавшатайми, мĕншĕн тесен ăна большевиксен аслă партийĕ йертсе пырат, ăна Сталинла Тĕп Комитет тата Совет правителстви йертсе пырат.

Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ никам хавшатайми, мĕншĕн тесен вăл совет халăхĕпе пиншер-пиншер майсемпе çыхăнса тăрат, вăл унăн ачи пулса тăрат.

Депутат йулташсем! Совет халăхĕн мĕн пуррисене, мĕнле çитĕнÿсем тунине вăл вĕсене йăлтах большевиксен чаплă партийĕ йертсе пынипе тунă. Ленин партине епĕр тăвана йуратнă пек йуратат-пăр. (Алă çупаççĕ).

Сталинла Тĕп Комитета тата Совет правителствине епĕр вĕçĕмсĕр шанатпăр. (Тăвăллăн алă çупаççĕ)

Халăхсем шанса суйланă хаклă йулташсем! Епĕр пĕтĕм Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн йачĕпе Аслă Совета тата пĕтĕм совет халăхне çапла каласа шанта-ратпăр: пирĕн аслă çĕршывăн чиккисем шанчăклăн сыхланса тăрас çĕ. Парти, правителства тата Сталин йулташ (тăвăллăн алă çупаççĕ) пĕрре чĕнсенех Хĕрлĕ Çар хăйĕн социалисăмла тăван çĕршывне сыхлама тăрĕ, Ленин—Сталин аслă партийĕн хĕрлĕ йалавĕ айĕнче пырса, тăшмана хăйĕн территорийĕ çинчех çĕмĕрсе такĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ .Пурте ура çине тăраççĕ Выранĕсенчен:„ Урра" тесе кăшкăраççĕ).

Сывă пултăр пирĕн йуратнă тăван çĕршыври халăхсен тăванлă союзĕ!

Сывă пултăр государствă влаçĕн чи аслă органĕ — ССР Союзĕн Аслă Совечĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата учител Сталин йулташ! (Пурте ура çине тăраççĕ. Хĕрлĕ Çара тата Сталин йулташа чысласа нумайччен тăвăллă оваци тăваççĕ).

А. Ф. СЕЛЕЗНЕВ йулташ сăмахĕ

(Кĕçĕн командир-подводник)

Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн Аслă Совечĕн депутат йулташсем, сире, халăх шанса суйланă çынсене—пирĕн çĕршывăн лайăх çыннисене, Хĕрлĕ Флотла çулăмлă хастарлă салам калама ирĕк парăр, (Алă çупаççĕ)

Депутат йулташсем! Мана Тинĕс Çар флотĕнчи краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем Аслă Советăн пĕрремĕш депутатне, Хĕрлĕ Çарпа Флотăн йуратнă тусне тата учителне, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçне Сталин йулташа хĕрÿллĕ салам калама хушрĕç. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ, „Урра" тесе кăшкăраççĕ).

Пирĕн мухтавлă большевикла партин Сталинла Тĕп Комитечĕ тата совет правителстви йертсе пынипе Совет Союзĕнчи халăхсем пĕтĕм тĕнчипе историлĕ социалисăмлă çĕнтерÿсем турĕç. Пирен çĕршывра социалисăмлă телейлĕ пурнăç кунранкунах туллин та сутăн чечекленсе пырат. Пирен хăватлă тăван çĕршывăн нихăçан курманла пысăк çĕнтерÿвĕсене пролетарилĕ полководец Совет Союзĕн пĕрремĕш Маршалĕ Климент Йĕфремович Ворошилов (нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ) йертсе пыракан никам çĕнтерейми мухтавлă Хĕрлĕ Çар сыхлат, тата Халăх Комиссарĕ Смирнов йулташ пуçпулса йертсе пыракан Тинĕс Çар флочĕ сыхлат. (Алă çупаççĕ).

Тинĕс-Çар флотĕнчи краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем пирĕн социалисăмлă тăван çĕршыва фашисла вăрçă чĕртекенсем тата вĕсен ылханлă агенчĕсем — троцкисла-бухаринла бандитсем,шпионсем, диверсантсем тата çынвĕлеренсем тапăнассинчен сыхлама пĕтĕм совет халăхĕпе перле хăйсен пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пĕлÿне тата пултарулăхне, кирлĕ пулсан пурнăçне те пама хатĕр.

Депутат йулташсем, епĕр Сталин йулташ пуçарнипе правителствă Тинĕс Çар Флочĕн Халăх Комиссариатне тăвасси çинчен йышăннă решенийĕ хĕрÿлĕн саламласа ырлатпăр. (Алă çупаççĕ).

Ку решенийĕ флотсенче тата флотилисенче калама çук пысăк савăнăçпа тата хастарлăхпа кĕтсе илчĕç.

Хăватлă совет çĕршывĕн хăйĕн интересĕсене тивĕçлĕ тинĕс тата океан флочĕ пулмала, вăл пулат те.

Епĕр пире шаннăшăн хĕпĕртетпĕр, кирек хăш вăхатра та, хĕлле те, çулла та, шыв çинче те тата шыв айĕнче те йе сывлăшра тăшмана, вăл хăт те мĕнле тинĕсре тата океанра пулсан та, ăна пĕтерсе такма епĕр хатĕр пулнине партипе правителствăна, сире, депутат йулташсем, тата Сталин йулташа шантаратпăр. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Епĕр, Тинĕс-Çар флотĕнчи краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, Аслă Совет умĕнче хамăран çар ĕçĕпе политикăна вĕренессипе татах та çÿлерех хăпаргма пулатпăр, çаван пекех тата кĕске срукрах тинĕс-çар флотне пирĕн çĕнĕрен стройа кĕрекен малта пыракан чи вĕр çенĕ техникăпа хĕçпăшалланнă карапсен техникине алла çавăрса илме пулатпăр.

Епĕр Аслă Совета, Сталин йулташа тата Молотов йулташа хăватлă тинĕс çар флотне тăвас тĕлĕшпе пысăк вăйпа, пĕр ывăнмасăр ĕçлеме пулни çинчен шантаратпăр. (Алă çупаççĕ).

Вăл чаныах çавăн пек пулассине шантаракани вăл—пĕтĕм совет халăхĕ, большевикла партин Тĕп Комитечĕпе халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ тавра пĕтĕçсе тăни, ăна вĕçĕмсĕр йуратни.

Сывă пултăр хăватлă Тинĕс-Çар флочĕ! (Алă çупаççĕ).

Сывă пултăр большевиксен мухтавлă партийĕ тата унăн сталинла Тĕп Комитечĕ. (Алă çупаççĕ).

Сывă пултăр Аслă Совет Президиумĕн Председателĕ Михаил Иванович Калинин! (Алă çупаççĕ)

Сывă пултăр ĕççыннисен çулпуçĕ тата учителĕ ,Сталин йулташ! (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ,„Урра", „Сывă пултăр Сталин йулташ!" тесе кăшкăраççĕ. Шавлăн алă çупнипе тата фанфар сассипе Хĕрлĕ çар тата Тинĕс Çар Флочĕн делегацийĕ залран тухса кайат. „Урра!", „Сывă пултăр Совет Союзĕн пĕрремĕш Маршалĕ Ворошилов йулташ" тесе кăшкăраççĕ)

нипе епĕр Октябĕрти социалисăмла революцин чи йăвăр задачине пурнăçа кĕртрĕмĕр. Производствăн коллективлă формине усăллине хресченсем хăйсен опычĕнче курса ĕненчĕç. 1929 çулта колхоза массăллăн кĕме тытăнчĕç. Сталин йулташ пуçарнипе парти кулаксене картлас, пÿлес политикăран йалхуçалăхне талкишпе коллективизацилене никĕс çинче кулаксен класне пĕтерес политикă çине куçрĕ. Хресченсем пурте тенĕ пекех колхоза куçрĕç.

Ленин хресченсен вак харпăрлăхлă психологине шултра машинлă техникă никĕсĕ çинче çеç пĕтерме пултарасси çинчен вĕрентнĕ. Сталин йулташ йертсе пынипе çакнашкал никĕс тунă. Халĕ йалта 450 пин трактор, 120 пин комбайн, 120 пин грузовой автомобиль ĕçлет.

ССР Союзĕн йалхуçалăх продукцийĕ вăрçăччен хи вăхăтпа танлаштарсан икĕ хут ÿснĕ. Социалисăмла йалхуçалăхĕ пĕрчĕлĕ тырăсене 7 мĕлйард пăт йахăн тăвакан пулчĕ. Колхозлă йалăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси ÿсет. Колхозлă йал чухăнлăха, помещиксемпе кулаксен пусмăрне пĕлмест.

* * *

Партин ленинла-сталинла наци политикин çитĕнĕвĕсем пите пысăк. Ленин халăхсен тăванлăхне çирĕплетме йалănах вĕрентнĕ. Ленин тупăкĕ умĕнче аслă учител заповедне—республикăсен союзне çирĕплетме тата сарма тупа тунă Сталин йулташ ăслă йертсе пынипе, çак ленинла хушусене пит те чаплăн пурнăçа кĕртнĕ.

Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци нацилĕ пусмăра йаланлăха пĕтерчĕ, ĕлĕк пусмăрта пулнă халăхсене тулли пĕртанлăх прави панă,

Нацилĕ, ĕлĕк кайа йулнă республикăсенче социалисăмла промышленнăç вăйлăн аталанат, квалификацилĕ рабочисен нацилĕ кадрĕсем ÿсеççĕ. ССР Союзĕнчи пĕртанлă халăхсен туслăхĕ çирĕпленет.

Социалисăмăн çак чаплă çитĕнÿвĕсене Сталинла Конституцире кăтартнă.

* * *

Ленин хушса хăварнисене, чи малтан, Сталин йулташ Ленин пекех тăшмансене хирĕç хайаррăн кĕрешме, вĕсене тăпăлтарса пĕтерме вĕрентнĕ пирки, пит те чаплăн пурнăçа кĕртнĕ. Çакăнта большевисăмăн аслă вăйĕ.

Социалисăмпа капиталисăм хушшинчи кĕрешÿ çивĕчленсе пырат. Капиталисăмла, чи малтан фашисла çĕршывсен разведкисем Совет Союзне социалисăма хирĕç сăтăрлă ĕçсем тума шпионсем, сăтăрçăсем йараççĕ. Троцкисла-бухаринла мерзавцăсем тахçанах шпионсемпе провокаторсен банди пулса тăнă, йутçĕршыв разведкисене сутăннă. Вĕсем социалисăмла тăван çĕршыва сутса, рабочисемпе хресченсен йунне йухтарнипе пирĕн çĕршывра капиталисăм йĕркине кайала тавăрма, ăна империалисăм колонийĕ туса хума ĕмĕтленнĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 çулти февраль-март уйăхĕсенче пулнă Пленумĕнче тунă докладра Сталин йулташ клас тăшманĕсен кучухнехи тактикине кăтартрĕ, парти, хуçалăх т. ыт. органĕсен ĕçĕнчи пит те пысăк çитменлĕхсене тупса палăртрĕ, троцкисла-бухаринла шпионсене, сăтăрçăсене, диверсантсене, çынвĕлеренсене тупса палăртма, социалисăм строителĕсене çивĕч хĕçпăшал пачĕ. Пĕтĕм совет халăхĕ пĕр шухăшлă пулса пулăшнипе Сталинла Нарком Йежов йулташ йертсе пыракан мухтавлă Наркомвнуделцăсем фашисла наймитсен шпионла йăвисене тупса палăртаççĕ, вĕсене пĕтереççĕ. Анчах та тăшмансен пур йăвисене те пĕтерсе çитермен-ха. Сыхă пулар! Шпионсене хăйсен йулашки шăтăкĕсенчен туртса кăларар! Вĕсене пимĕн йулмиччен пĕтерер!

* * *

Хăйĕн паллă ĕçĕнче, „Детская болезнь „левизны" в коммунизме" йатлă кĕнекинче Ленин большевиксен çитĕнÿ тумали тĕп условисенчен пĕри вĕсене ĕççыннисен масси пулăшни пулат тесе кăтартнă. Ленин—Сталин партийĕ, ĕçхалăх массипе çыхăну тытма ăна çирĕплетсе пыма пĕлнĕ пирки, йаланах çĕнтерÿ тăват, халăх хушшинчен çĕнĕрен те çĕнĕ вăй илет, халăхăн творчествăлă пуйан вăйне вăратат.

Капиталисăм халăх талантĕсене пĕтернĕ. Социалисăм вĕсене туллин чечекленме май парат. Совет çĕршывĕнче ĕç халăх хушшинчен социалисăмла хуçалăхăн паха организаторĕсем, ăслăлăх деятелĕсем, государствă çыннисем, обществолла ĕçре лайăх ĕçлекен çынсем ÿсрĕç, малашне те ÿсеççĕ.

Партипе халăх хушшинчи çыхăну кашни кун çирĕпленет. Сталинла Конституци ĕççыннисен политикăла активлăхĕн çĕнĕ хумне çĕклерĕ. Ку ССР Союзĕн Аслă Советне суйланă вăхăтра лайăх курăнчĕ, пĕтĕм суйлавçăсенчен 96,8 проценчĕ сасăланă. Нихăçан та, нимĕнле çĕршыв та суйлавçăсем çапла активлă пулнине курман.

Суйлав вăхăтĕнче ССР Союзĕнчи ĕççыннисем хăйсем большевиксен парти ĕçĕшĕн, совет правителстви ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçленине кăтартрĕç. Ку вăл коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтернинче уççăн курăнчĕ. Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн Союз Советне суйланă чухне пĕтĕм суйлавçăсенчен 98,6 процент, Национальнăçсен Советне суйланă чухне 97,8 процент сасăланă. ССР Союзĕн Аслă Совечĕн суйлавĕ совет халăхĕн морально тата политикăла пĕрлĕхне кăтартрĕ.

Çак пĕрлĕхе Аслă Советăн Çессинче те лайăх кăтартнă. Аслă Совет депутачĕсем Аслă Сталин йулташпа тĕл пулнин историлĕ вăхăчĕсене нихçан та манас çук. Аслă Советăн депутачĕсем партине, Сталина шутсăр хытă йуратнине, парти тавра пĕтĕçсе тăнине, пĕр шухăшлă пулнине кăтартрĕç.

* * *

Сталинла Конституци çине çырса хунă социалисăм çĕнтерĕвĕсем пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисемшĕн ытларах та ытларах паллă пулса пыраççĕ. Хăйĕн ĕçĕн хуçи пулнă ĕççыннисем мĕнле пысăк ĕçсем тума пултарнине вĕсем кураççĕ. Тĕнчери ĕççыннисен хăйсен вăйне шанасси ÿсет. Империалисăма хирĕç, фашисăма хирĕç кĕрешÿ вăйланат. Испани халăхĕ Франкон, Гитлерĕн, Муссолинин фашисла бандичĕсене хирĕç паттăрăн кĕрешет. Китай халăхĕ йунлă Йапони империалисăмне хирĕç кĕрешме хăйĕн вăйне пухат.

Фашисăма хирĕçле халăх фрончĕ çирĕпленет.

Тĕнчери ĕççыннисен империалисăма хирĕçле кĕрешÿвĕнчи вăйĕсем çирĕпленеççĕ! Ленинисăм çĕнтерсе пырат! Ленинисăм пĕтĕм тĕнчипех çĕнтерет!

Политикăла агитаци тата сочувствуйушчисемпе ĕçлесси

ПСК(б) Парти Канаш райкомĕн секретарĕ Майоров йулташпа райкомра ĕçлекен ытти йулташсенчен—сирĕн районра политикла агитаци ĕçĕ мĕнле пырат, халăх хушшинче хальхи вăхăтра агитаторсем ĕçлеççĕ и?—тесе ыйтсан, вĕсем тÿрех:—ССР Союзĕн Аслă Совечĕн суйлавне хатĕрленнĕ тата ăна иртгернĕ вăхăтра агитаторсем лайăх ĕçлерĕç, пирĕн ĕçлеме пултаракан шанчăклă агитаторсем нумай,—тесе иртерсе йама тăрăшаççĕ. Анчах вĕсем хальхи вăхăтра политикăла агитацине халăх хушшинче мĕнле организацилени çинчен калама йуратсах каймаççĕ. Мĕншĕн тесен, тÿрех калас пулат, Канаш районĕнче хальхи вăхăтра политикăла агитаци ĕçĕ сÿнсе ларма пуçланă. ПСК(б)Парти райкомĕ агитаторсене ĕçре пулăшман, агитаторсен семинарĕсене план тăрăх йĕркелĕ туса пыман. Ун çинчен Канашри вагон сем йусакан заводри агитатор Севостйанов йулташ çапла калат:

— Пирĕн уйрăм работниксем (парти райкомĕнче ĕçлекенсем) агитаци ĕçне „вăхăчĕ-вăхăчĕпе" туса пыраççĕ. Ку ĕçпе куллен йертсе пымаççĕ. Агитаторсен семинарĕсене иртермеççĕ, иртеркелесен те час-часах çиелтен çеç иртереççĕ. Агитаторсене кирлĕ ыйтусене тата параймаççĕ. Малашне агитаторсен семинарĕсене план тăрăх, лайăх хатĕрленсе иртерсе пымала.

Районра политикăла агитаци ĕçĕ начар тăнă пир и районри „Социалисамшăн" хаçат та питĕ уççăн акă çапла çырат:

—Аслă Совет суйлавĕ иртернĕренпе хăшпĕр йалсенче агитаци ĕçĕ пачах сÿнсе ларнă, агитаторсем ĕçрен „тăварăнса" кайнă. Ăна Ачча йалсовет председателĕ Йăковлев йулташ (районри агитаторсен канашлăвĕнче) хăй сăмахĕпех çирĕплетрĕ:—Епĕр Аслă Совет суйлавне хатĕрленнĕ вăхăтра килĕрен çÿресе суйлав саккунĕ çинчен вĕрентеттĕмĕр, а суйлав иртнĕренпе пирĕн ку ĕç шăнсах ларчĕ,—тет вăл. Кун пек тĕслĕх Аччара анчах мар, Вĕта пуçĕнче, Вăрăмпуçĕнче, Кармаминче те çавнашкалах. Паллах, выранти агитаторсем куйшăн айăплă мар. Вĕсен ĕçне йĕркелесе йертсе пыма тивĕç çынсем айăплă"...

Районра политикăлă агитаци ĕçĕ начар тăни пирки çапла калаççĕ агитаторсем, çаван пекех çырат „Социалисăмшăн" хаçат та.

Терĕс калаççĕ вĕсем. ПСК(б)Парти Канаш райкомĕ йулашки вăхăтра агитаторсемпе ĕçлессине манăçа, хăварнă. тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларнă. Ĕçхалăх хушшинче политикăла агитацине организацилессине çакăн пек тимсĕрĕн, пĕр ответсăр пăхнине чăтма май çук. ПСК(б)Парти Канаш райкомĕн ĕçхалăх масси хушшинче политикăла агитацине тивĕçлипе организацилесе йарассишĕн çине тăрсах ĕçлемеле.

Акă тата сочувствуйушчисемпе ĕçлесси мĕнле пынине илсе пăхар. Сочувствуйушчисен хушшинче ĕçлесси—парторганизацин пысăк ĕçĕ пулса тăни пуриншĕн те паллă. Сочувствуйушчисен хушшинче ĕçе кирлĕ пек организацилесе—фабрик-заводри, колхозри стахановецсене, пур йенчен те шанчăклă тата примерлă çынсене епĕр парти ретне кĕме хатĕрлетпĕр. Анчах, калас пулат, ПСК(б)Парти райкомĕ сочувствуйушчисемпе ĕçлесси çинчен мансах кайнă. Районра миçе сочувствуйушчи шутланса тăнине те тĕплĕн пелмеççĕ. Райкомăн учот пайĕн пуçлăхĕ каланипе 55—60 сочувствуйушчи шутланса тăрат. Пир и райком секретарĕ Майоров йулташ каланă тăрăх районра сочувствуйушчисем 40 çын пулмала. Сочувствуйушчи шутне никам та теплĕн каласа параймаст. Паллах ĕнтĕ, сочувствуйушчисен шутне те пĕлмеççĕ пулсан, вĕсемпе мĕнле ĕçлени çинчен ыйтма та кирлĕмар Парти райкомĕ сочувствуйушчисемпе ĕçлессине маннă, ăна хакламаст. Çавăнпах ĕнтĕ хăшпĕр пуçламĕш организацисем çумĕнче сочувствуйушчисем пĕрерĕн кăна шутланса тăраççĕ Акă райĕçтăвком, машинă-тракторлă станци çумĕнчи пуçламĕш организацисенче пĕрер сочувствуйушчи кăна шутланат, калас пулат, ку пуçламĕш организацисем районри чи пысăк организацисем. Сочувствуйушчисемпе ĕçлесси çине хакламасăр сÿрĕккĕн пăхнипех предприйатисенчи, колхозсенчи стахановецсемпе ударниксем, пур йенчен те шанчăкла, таса тата примерлă çынсем парти ретне кĕреймесĕр тăраççĕ.

Ĕçхалăхĕ хушшинче политикăлă агитацине тата сочувствуйушчисен хушшинчи ĕçе пĕтĕм тимлĕхпе лайăх организацилесе йарасси вăл—ПСК(б)Парти Канаш райкомĕ умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕри пулат.

Н. Косойкин.

Татăклă улшăну тумала

ЙĔПРЕÇ. Çак кунсенче райĕçтăвкомăн VI мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. ПСК(б)П райком секретарĕ П. Андрейев йулташ 1938 çулхи çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн тата тухса каласнисем тăрах, районра çуракине хатĕрленес ĕç сӳреккĕн пулса пыни курăнчĕ. ПСК(б)П Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулта декабĕрĕн 20-мĕшĕнче тата 1938 ç. йанварĕн 9-мĕшĕнче „Çуракине хатĕрленесси çинчен" йышăнна постановленисенче Йĕпреç районĕнче çуракине хатĕрленес ĕç уйрăмăнах çителĕксĕр пулса пынине палăртса, ĕçре татăклă улшăну тума хушнă пулсан та, райçĕрĕç пайĕпе МТС-чи руководителсем, çавăн пекех йалсоветсемпе колхоз правленисем хăйсене вăлдьи тивĕçлĕ урок туман, çуракине хатĕрленес ĕçе большевикла организацилемен.

Çакăн пек йаралanса ĕçленине пула акмали вăрлăхсене уйăрса хурас, суртлас, вăрлăхсене улăштарас, минераллă удобренисене кӳрсе килес, çĕре çемçетмели выранти йапаласене хатĕрлес, йалхуçалăх машинисене ремонтлас ĕçсем чăтма çук йулса пыраççĕ. Пайанхи куна йĕтĕн вăррине—82 процент, клевер—33 процент, тимофейевкă—65 процент çеç уйăрса хунă. Вăрлăх суртлассине 11 процент, трийер витĕр кăларассине 12 процент çеç пурнăçланă „Победа", „Мăрат", „Дв. революции" т. ыт. колхозсенче сортировкăсемпе трийерсем ĕççĕр лараççĕ, вăрлăхсене суртлас ĕçе организацилемен.

Çĕре çемçетмели выранти йапаласене хатĕрлесси те сӳреккĕн пырать. Райçĕрĕç пайĕн йанвар уйăхĕнче туса иртермели агротехникăла ĕçсен планне: тислĕкпе—13,2, торфпа—5,4 процент çеç пурнăçланă т. ыт. те.

Йалхуçалăх машинисене ремонтлассипе те çавăн пекех.

Пленум уйрăмăнах суртлă вăрлăх улăштарас ĕç пит те йапăх пынине палăртрĕ. Суртлă вăрлăх улăштарас плана: тулă—17 процент, сĕлĕ—12 процент, вир—3,3 процент, мĕн пур культурăсемпе 13,6 процент çеç пурнăçланă. Суртлă вăрлăх улăштарассипе „Хĕрлĕ Октябĕр", „17-й партс'езд", „Осоавиахим" колхозсем çеç плана пурнăçланă. Чапайев йачĕпе тăракан колхоз (председателĕ Смолин, коммунис) суртлă вăрлăх улăштарассине йури нăрмантарса тăрать. Вăрлăх суртлас ĕçе те кирлĕ пек организацилемен. Кăçхи сменăпа ĕçлессине йĕркелемен. Кунне 5—6 сехет ĕçлеççĕ те, тепĕр кунне трийер ĕççĕр ларать.

Ку çеç те мар, Чапайев йачĕпе тăракан колхоза „Хĕрлĕ металлист" колхозран вăрлăх улăштарма пырсан, колхоз председателĕ Смолин лавсене кайала çавăрса йанă. „Мăрат" колхозĕнче те суртлă вăрлăх улăштарасси чарăнса тăрать.

Пленум суртлă вăрлăх улăштарассинче Çĕрĕç халăх комиссариачĕ йенчен те чăрмавсем пулнине палăртрĕ. ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулта октябĕрĕн 21-мĕшĕнче йышăннă постановленипе тăрăх Йĕпреç районĕн Кувакинă районне кайса „Красный тойдинское" йатлă суртлă вир улăштармала пулнă. Райçĕрĕç пайĕ çакăн пирки Кувакинă райçĕрĕç пайне ыйтса хут çырса йанă. Ответне декабĕрĕн 20-мĕшĕнче тин илме пултарнă. Вăл та пулин райçĕрĕç пайĕн агрономĕ Смоланов Шупашкарта Кувакинă райçĕрĕç пайĕн агрономне Рыжова курса калаçнипе çеç. „Пирĕн ытлашши вир вăрлăхĕ çук, улăштарма пултараймастпăр", тенĕ вĕсем.

Çакăн хыççăн йанварĕн 11-мĕшĕнче Çĕрĕç халăх комиссариачĕ вир вăрлăхне Çĕмĕрле районне кайса улăштармала тесе кăтарту панă. Кунта та ĕç тухман. Çапла вара вир вăрлăхне улăштарас ĕç çак тарана çитиччен тăсăлса пырать. Хăçан улăштарасси паллă мар.

Вăрлăх хатĕрлес, суртлас, суртлă вăрлăхпа улăштарас ĕçсем йулса пыни—тырпулсене çапасси чăсăлса пынинчен те нумай килчĕ. Пайанхи куна 19 колхозра тырпулсене çапса пĕтермен.

Йĕпреç районĕ çакăн пек чăтма çук кайа йулса пыни, вăл район руководствинче халăх тăшманĕсем ĕçленинчен килчĕ, терĕ пленум. Райĕçтăвком председателĕнче ĕçленĕ Захаров, райком секретарĕ пулса ĕçленĕ Григорйев йалхуçалăх ĕçĕсемпе пĕртте интересленмен, йалсоветсемпе колхозсене йертсе пыман. 1937 çулта нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ йалсоветсемпе колхоз председателĕсен канашлăвĕнче Захаров çапла каланă: — суртлă вăрлăх улăштарма васкамасан та йурать, йанвар уйăхĕччен улăштарса пĕтерĕпĕр-ха, тенĕ. Çав вăхăтрах канашлура суртлă вăрлăха нойабĕрĕн 20-мĕшĕнче улăштарса пĕтересси çинчен каласнă, райĕçтăвком президиумĕн решенийĕ те çавăн пек пулнă. Çавăнтан ĕнтĕ Захаровăн тăшманла ĕçĕ уççăнах палăрать.

Райçĕрĕç пайĕнче Илйин троцкис ĕçленĕ. Ун хыççăн райçĕрĕç пайĕн пуçлăхне каллех ĕçкĕпе йавăçса кайнă пўтсĕр Лебедева кӳртсе лартнă. Вăл колхозсене йертсе пыман, ĕçкĕ хыççăн çеç çӳренĕ. Агрономсем хушшинче те халăх тăшманĕсем ĕçленĕ. Мăрат участкинчи агроном Григорйев тырпулсен суртлăхне йурийех пĕтерсе лартма тăрăшнă, çак майпа вăл суртлă вăрлăхсене суртсăррипе хутшăнтарса йанă. Пусуçаврнăшне пăсса пырса, тырпул тухăçне чакармали майсем туса пынă. Тырпулсене сийен тăвакан сăвăссене пĕтерес вырăнне, вĕсене ĕрчеме май туса пурăннă.

Район руководствинче халăх тăшманĕсем ĕçленине пула, колхозсенче те вĕсем вăй илме пултарнă.

Пленумра критикăпа самокритикă вăйлă пулчĕ. Халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсене пĕтерме, малашне йалхуçалăх ĕçĕнче татăклă улшăнусем тума, кăçалхи вăйлă тырпул кĕрешĕвне большевикла организацилеме палăртса татăкла решени йышăннă.

Дм. Михайлов.
В. Алексейева.

„Трактор" колхоз мĕншĕн йалан кайра пырать?

Кӳкеçри „Трактор" колхозăн шыв арманĕ пур. Çав арман çуркунне кăшни çул пĕр уйăх хушши ĕçлет. Иртнĕ çулта та пĕр уйăх ĕçлерĕ. Анчах та пуçтарăннă гарнц колхоза кĕмест. Вăл тырра государства парас вырăнне колхоз председателĕ Родионов, арман мелникĕ Глухарев, аслă конюх Шутников, завхоз Йефимов хăйсем хушшинче валеçеççĕ те, лашасем валли фуража йанă тесе акт çыраççĕ. Çитменнине тата арманне те йапăхтарса йараççĕ.

Колхоз 5,82 гектар çинче пахча-çимĕç лартса тăвать. 0,52 гектар çине 1937 çулта помидор лартнă пулнă. Ăна вăхăтра пуçтарса кĕртмесĕр нумай помидор çĕртсе йанă. Пуçтарса кĕртнисене те 60 пăта йахăн çĕртсе пĕтернĕ. 2,5 гектар çинче купăста пулнă. Анчах, ирхи те кĕрхи суртсене хутăш лартнă пирки, ирхи суртсем пурте çĕрсе кайнă. Аран-аран 6 центнер ытларах пуçтарса кĕртнĕ. Хăйар, кăшман тата ытти çимĕçсем ăçта кайнине никам та пĕлмест. Пахча çимĕç пирки колхозăн 2 пин тенкĕлĕх сийен тӳсмеле пулни çеç паллă.

Колхоз председателĕ Родионов 1936 çулта 27 пăт колхоз тыррине приходра палăртмасăр хăй патне чикнĕ. Хăй пӳрт лартнă чух ĕçлене платниксене колхоз тыррине панă. Колхоз мăкĕпе пӳртне мăкланă, колхоз кирпĕчĕпе кăмака лартнă. Çитменнине тата 5 пăт тырă Иванова колхозницăна сутнă, колхоз хăмине районри милици начальникĕ пулнă Михайлова сутнă. Уксине, паллах, пурне те хăй кăсйине чикнĕ.

Родионов хăй тавра шанчăксăр çынсене пухса ĕçлет. Унăн тусĕсем Кириллов Павел, Глухарев М., Свинцов И., Исайев И.—пурте колхоз пурлăхне çаратма пăхакансем. Çавсемпе пĕрле ĕçлесе Родионов колхоза пĕтĕмпех йухăнтарса йачĕ. Çавна кура декабĕрĕн 29-мĕшĕнче колхозниксем Родионова колхоз председателĕнчен кăларасси çинчен ыйту лартрĕç. Анчах та, çĕрĕç пай пуçлăхĕ Йегоров Родионов майлă хытă тăнипе вăл каллех председателе йулчĕ. Пухăннисенчен 40 процент çеç Родионовшăн сасăларĕç пулин те, çĕрĕç пайĕ Родионова председател тума васкарĕ.

Родионова районри организацисем пурте хӳтĕлеççĕ Вăл колхозниксене хĕнени те пулнă. Анчах районри прокурор çав ĕçе пĕтерсе лартрĕ.

Колхозник.

Çуралакансен шучĕ ӳссех пырать

КУКЕÇ. Шăмăш йалсоветĕнче 1934 çултан пуçласа 1938 çулччен пĕтĕмпе 315 ача çуралнă. Çуралакансен шучĕ пуринчен ытларах çак йулашки çулсенче нумай ӳсни палăрчĕ.

И. Лаврентйев.

„Чечекленекен социалисăмлă Украинă" выставкăран.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Сталин йачĕпе тăракан заводăн хурçă шăратакан цехĕ (Сталино хули)". М. Шапошников художник ӳкерчĕкĕ.

Союзфото репродукцийĕ.

Малтисен примерĕ

ВĂРНАР. Колцовкăри СТАЛИН йачĕпе тăракан колхоз кăçал пысăк тупăшлă тырпул туса илессишĕн тăрăшса ĕçлет. Пайанхи куна колхоз 5000 лав тислĕк, 5000 лав торф кăларса уйа турттарнă. 100 центнер кĕл пухнă, йалхуçалăх машинисене йусаса пĕтернĕ.

Ытти колхозсем те çуракине хĕрсех хатĕрленеççĕ. Акă: Мăн Елменти „Трактор" колхоз çак кунсенче уйа 1006 лав тислĕк, 4020 лав торф кăларчĕ. Çавалкас Мăратри „Çутала" колхоз 200 лав торф уйа турттарнă.

Анчах та районра кунашкал колхозсем питех те сахал. Хăш пĕр колхозсем çуракине хатĕрленесси çине пӳрне витĕр çеç пăхаççĕ. Гуванкинă колхозĕ пайанхи куна çитсе те йалхуçалăх машинисене йур айĕнчен пухса кĕртмен. Колхозăн трактор пур, анчах та тасатман пирки трактор тутăхса ларнă. Пĕр пĕрчĕ те вăрлăх тасатман.

Хурăн Кăкшăмри „Красноармейец" колхозра çуракине хатĕрленесси çинчен шугласа та пăхмаççĕ. Пайанхи куна çитсе колхозра уйа пĕр лав навус та, торф та кăларман. Колхозниксене ĕçкунĕпе тупăш валеçсе паман. Вăрлăхсене тасатасси çинчен шугламаççĕ те.

Çавăн пекех Алгазин, Çĕнйахакасси, Чалăм Кăкшăм, Чăрăш Хирлеп, колхозĕсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

Районри хăш-пĕр колхозсем çуракине начар хатĕрленнине районри çĕрĕç пайĕ лайăх пĕлсе тăрать пулин те ĕçре пулăшу памасть. Чалăм Кăкшăм колхозĕ пăрса вăрлăхне улăштарма „Трактор" колхоза, йасмăк вăрлăхне улăштарма „Хĕрлĕ кавалерис" колхоза йанă. Çав вăхăтрах ку колхозсенче хăйсен те асăннă вăрлăхсем пачах пулман. Колхозсем çуракинчи агроплансем туна чухне унта агрономсем пулмала пулсан, ку таранчен вĕсем йалсенче пулман.

Ст. Улангай.

Стахановла йухăмăн резерви

Стахановецсем—ĕçпе пурнăç çине çĕнĕле, большевикла пăхма вĕренсе çитнĕ, техникăн пĕтĕм вăйĕпе тата пултарулăхĕпе туллин усă курма пултаракан çынсем. Вĕсем хăйсен чаплă ĕçĕсемпе ĕç тухăçлăхне пысăккăн ӳстерсе пыма майсем кăтартса çул уçса пыраççĕ.

Стахановецсем хăйсем тĕллĕн çуралса ӳсме пултараймаççĕ. Вĕсем нумай мĕлйунлă, хăйсен ретне рабочисен пысăк массисене куллен йавăçтарса пыракан ударниксен çемйинчен тухнă. Стахановецсем хăйсен ĕçĕсемпе тата историйĕпе социалисăмла ăмăрту ӳстернĕ ударниксемпе тачăн çыхăнса тăраççĕ.

В. И. Ленин „Ăмăртува мĕнле организацилемелле" тенĕ статйинче буржуалă писателсем капиталиссен тата капиталисла йĕркен конкуренцине мухтаса çырнин суйалăхне тăрă шыв çине кăларса социалисăмлă çĕршывра ăмăрту мĕнле вырăн йышăнассине тӳррĕн те ăнланмала кăтартса панă.

„Социалисăм,—çырать Ленин,—ăмăртува сӳнтермест çеç мар, пачах урăхла, вăл ăна пуçласа чăн-чăн анлăн, чăн-чăн массăлăн ĕçе кӳртсе пыма, ĕççыннисен чăн-чăн ытларахăшне вĕсем хăйсене хăйсем палăртса пама, хăйсен пултарулăхне апкăртса йама, иксĕлми çăлкуçĕнчи шыв пекех, халăх хушшинчи пит те нумай талантсене,—капиталисăм пинĕ-пинĕпе, мĕлйуншарăн ирнĕ, таптанă, пăвнăскерсене,—палăртса тухма пулăшакан ĕçе йавăçтарма май парать".

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе социалисăмла ăмăрту социалисăм çĕнтернĕ аслă çĕршыври пĕтĕм халăхăн йухăмĕ, социалисăм строителствин вăйлă рычагĕ пулса тăчĕ. Социалисăмла ăмăрту ударниксен пысăк çарне çитĕнтерчĕ, çавникĕç çинче 1935 çулта стахановла йухăма—социалисăмла ăмăртун çулĕрех формине çуратрĕ. Апла пулсан—стахановла йухăма вăйлатассишĕн, стахановецсен йышне ӳстерессишĕн кĕрешессине ударниксен хушшинче ĕçлессипе тачăн çыхăнтарса, социалисăмла ăмăртăва тĕрĕс организацилени никĕс çинче туса пымала.

Ку ответлă ĕçе чылай предприйатисенче, аласта ертелĕсенче, уйрăмăнах вăрманпромхозсенче манăçа кăларнă. Чăвашвăрманпром системинче ударниксем хушшинче ĕçлеме мар, вĕсене шута илессине те йĕркелĕн туса пымаççĕ. Кунашкал фактсене чылай предприйатисенче курма пулать. Куславкка комбинатĕнче ударниксем çинчен пачах манса кайнă. Ударниксемпе уйрăмăн ĕçлессине нихăш предприйатисенче те пуçарман.

Çакнашкал пулнине руководителсем, профсойуз организацийĕсем: „ударниксен вăхăчĕ иртрĕ" тенипе сăлтавлама пикенеççĕ. Çав йăла хытă сарăлни пирки те ĕнтĕ халĕ предприйатисенче ударниксем хушшинче ĕçлессине хăй тĕллĕн пулса пырасси çине хунă. Пухусенче, производствăлă канашлусенче, ударниксен ĕçĕсем çинчен калаçмаççĕ. Вĕсен опычĕсем çинчен çутатса памаççĕ. Ударниксене хăйсен ĕçĕсем çинчен каласа пама йавăçтармаççĕ. Цехсенчи стена хаçачĕсем, фабрик-заводсенчи хаçатсем те ударниксем çинчен пачах та çырмаççĕ, вĕсен ĕçĕсене палăртмаççĕ.

Ударниксем вĕсем плана тултарса, ирттерсе тултаракан рабочисем. Ударниксем стахановла йухăмăн пысăк резерви пулса тăраççĕ. Çакна предприйати руководителĕсен, партипе, профсойузсен предприйатисенчи организацисен йалана асра тытмала. Ударниксемпе ĕçлессине пуçарса, кашни ударнике стахановец пулма пулăшмала. Ударниксен стахановец пулас ĕмĕтне пурнăçа кĕртме условисем туса памала. Ĕçре, пурнăçра пысăк чыс парса стахановецсен паха опычĕсем çине куçма вĕрентсе, пулăшса пымала. Ударниксем пулас стахановецсем. Çапла туни стахановла йухăма вăйлатма пысăк условисемпе майсем туса парать.

Колхоза кĕреççĕ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Память Ленина" колхоз колхозниксен пурнăçĕ çулран çулах пуйанланса, культурăланса пырать. Çакна кура колхоза çĕнĕрен хуçалăхсем кĕреççĕ. Акă, çак кунсенче икĕ хуçалăх колхоза кĕчĕç.

Е. Самарин.

Испанири фронтсенче

Республикăн оборона министерстви пĕлтернĕ тăрăх, йанварĕн 19-мĕшĕнче, пĕр кун кунĕпех, Теруел фронтĕнче Теруелрен çурçĕрелле вăйлă та хăйар çапăçусем пулса иртнĕ. Республиканецсем пăлхавçăсен пур атакисене те сирсе тăкнă.

Тĕл фронтра, чылай вăхăт хушши лăпкă тăнă хыççăн, йанварĕн 18-мĕшĕнче çĕрле пăлхавçăсен артиллерийĕ Мадрид çине çĕнĕрен пеме пуçланă.

Йанварĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла фашиссен ултă самолочĕ Майоркă утравĕ çинчен вĕçсе пырса, Барселонă хули варринчи кварталсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Темиçе çурт ишĕлсе аннă. 100 çын ытла вилнĕ. (ТАСС).

Америкăра Ленина асăнса траурлă митингсем туса ирттереççĕ

Америка компартийĕ Нйу-Йорк, Чикаго тата ытти хуласенче те Владимир Илйич Ленина асăнса массăлă митингсемпе демонстрацисем туса ирттерет.

(ТАСС).

Китай çарĕн геройĕсем

Китай çарĕ Йапони агрессорне хирĕç Китай халăхĕн никама пăхăнмалăмарлăхĕшĕн çапăçать. Вăл чăннипех те Китай халăхĕн тивĕçлĕ ывăлĕсене çитĕнтерсе пырать. Ĕнерхи хресченсем, винтовкă мĕнне пĕлменскерсем, агрессорпа кĕрешме çар ретне тăрса, чăн-чăн паттăрлăх кăтартаççĕ.

Чжанде çывăхĕнче (Хенань провинцин çурçĕрпе хĕвелтухăç пайĕ) тăракан 141-мĕш дивизин виçĕ паллă герой пур: Йан Хун-чжу салтак, отделени командирĕ Ма Ди-хун тата капитан Ван Ди-мин.

Виçĕ уйăх кайарах çав дивизи пĕр паллă стратегилĕ вырăна—Чжендин йатлă хулана хӳтĕлесе тăнă (Хебей провинцин хĕвеланăç пайĕ). Çав хуларан Тайауне (Шаньси провинцин столицийĕ пулнă хулана) чукун çул пырать. Йапони артиллерийĕ, пĕр çĕрте хула стенине çĕмĕрсе тăкиччен шăп, хула çине персе тăнă. Ир йеннепе Йапони пехоти артиллери хӳтипе çав çĕмĕрĕк вырăнтан хулана тапса кĕме тытăннă. Ван Ди-мин капитанăн чăçĕ çав вăхăтра кăнтăр йенчи хапхасен башни çинче пулнă. Йапонецсем хула стени çине хăпарсан Китай салтакĕсем вĕсене хирĕç уткăннă. Йапонецсем ал пулемйотĕнчен пеме тапратнă. Йан Хун-чжу салтак, пурнăçра пуçласа çапăçăва кĕнескер, пĕчĕк йышлă йулташĕсемпе пĕрле стенан пĕр пĕчĕк хӳтлĕхĕ патне чупса çитме ĕлкĕрнĕ. Йапони пулемйочĕ патне çитесси 100—150 метр кăна йулнă.

Паттăрсен пĕчĕкçĕ ушкăнĕ хӳтлĕх патĕнче хăйсен пулемйотне лартса, ик-виçĕ минут хушшинче йапонецсене стена çинчен персе антарнă. Йан Хун-чжупа йулташĕсем стена çине тапаланакан йапонецсене винтовкăсенчен пенĕ. Пулемйотран персе тăни Йапони пехотине ишĕлсе аннă стена çывăхне йаман. Паттăрсем йапонецсене, хулана çĕмĕрсе кĕме май памасăр, пĕр йар кун тытса тăнă. Паттăрсен ушкăнĕ катăлсах пынă. Вĕсен хĕрсе кайнă пулемйочĕ чарна-чарна ĕçленĕ. Анчах Йан Хун-чжу патне тата унăн чĕрĕ йулнă икĕ йулташĕ патне пулăшу персе çитнĕ.

Кăштах вăхăт иртсен çĕмрĕк вырăн патне китайец ен иккĕмĕш взвочĕ стена çумĕпе йăпшăнса пынă. Отделени командирĕ Ма Ди-хун, салтаксенчен пусма пек туса, Йан Хун-чжуа çӳле патронсем парса тăнă, амантнă тата вĕлернĕ пулемйотчиксен вырăнне çĕнĕ пулемйотчиксене хăпартса йанă. Çапла майпа стена çине 7 пулемйотчик хăпартнă. Анчах вĕсене те Йан Хун-чжу куçĕ умĕнчех вĕлернĕ.

Стена çинчен анма приказ илсен те Йан Хун-чжу часах анман. Аллăран амантнăскер, вăл тĕттĕм пулсан тин, йапонецсем тапăнма чарансан, стена çинчен аннă. Отделени командирĕ Ма Ди-хун пулăшнипе Йан Хун-чжу хӳтĕлесе тăнă çĕмрĕк стена патĕнче йапонецсем 200 çынна йахăн çухатнă. Сĕм çĕрле Китай çарĕ Чжендин хулинчен тухса кайнă. Вĕсемпе пĕрле вĕсен геройĕсем—аманнă капитан Ван Ди-мин, отделени командирĕ Ма Ди-хун тата салтак Йан Хун-чжу, Йапони захватчикĕсене хулана çĕмĕрсе кĕресрен пĕр кун тытса чарнăскерсем, чакса кайнă.

Виçĕ уйăх иртрĕ. Аманнă Йан Хун-чжу хăйĕн чаçне парахса кайман. Аманни тӳрленнĕ. Хăйĕн чаçĕпе пĕрле вăл каллех фронта, Бейпин-Ханькоу чукун çул участкине, таварăннă. Часах Ма Ди-хун командирпа Ван Ди-мин капитан та чаçа таварăннă. Малти позицисен окопĕнче вĕсем хăйула Йан Хун-чжупа курнăçса тĕл пулнă. Йан Хун-чжуа халĕ отделени командирĕ тунă. (ТАСС).

СУД

Çын вĕлерекен

Утар-касси йалĕнчи (Хĕрлĕ Чутай р.) арман хуçи ывăлĕ И. Герасимов хăйĕн арăмĕ пур çинчех йалти пĕр Р. йатлă хĕр çумне çыхланать. Унран мăшкăлать вăл. Кайрантарахпа çак хĕрĕн Герасимовран ача йулать. Ачи çуралсан алимент тӳлессинчен пăрăнас шутпа, Герасимов ирсĕр ĕç тума шут тытать. 1937 çулхи декабĕрĕн 4-мĕшĕнче каçхине хăй вăйпа çыпăçса пурăннă хĕре чӳрече витĕр пăшалпа персе вĕлерет.

1938 çулхи йанварĕн 11-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи халăх сучĕ çак ирсĕр ĕçе вырăна пырса пăхса тухса, И. Герасимова 8 çул хушши хупса усрамала турĕ. Колхозниксем суд приговорне ырларĕç.

А. Антонов.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Росснабфильм трестăн Чăваш Кантурĕ
Чăваш АСС Республикинчи кино-театрсен екранĕсем çине кăларать
— Саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм —
„Белеет парус одинокий"
В. Катайевăн пĕр йатлă повĕçĕ тăрăх Союздетфильм киностудийĕ тунă. Режиççор Вл. Легошин
—Саслă çĕнĕ фильм—
„Сыны трудового народа"
„Союзкинохроника" тунă
Йурăн сăмахĕсене А. СУРКОВ поет çырнă. Музыкисене ПОКРАСС тăвансем йĕркеленĕ.
Вырăнсенчи кинотеатрсенче хăçан кăтартассине асăрхăр.

Йалхуçалăх снабженин Чăваш кантурне
Машинисткă кирлĕ
Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Калинин урамĕ, 26. Йалхуçалăх снабженин Чăваш кантурĕ

Çыхăну управленин автобазине
йалан ĕçлеме кирлĕ:
1. Автомашинăсене лайăх пĕлекен опытла електрик
2. 6 мĕш тата 7-мĕш резрйадсенчи слесарсем
3. Пĕр çултан кайа мар стажлă шоферсем
Адрес: Çыхăну çурчĕ, 2-мĕш хутлăх, 30-мĕш пӳлĕм. Телефон №-4—07
3—1

Хурт-хăмăр ĕçĕн Чăваш кантурне
Опытлă бухгалтер кирлĕ
Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.
Адрес: Шупашкар, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, Хурт-хăмăр ĕçĕн кантурĕ.

Пахча-çимĕç хатĕрлев сойузĕн Чăваш кантурне
ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ:
Бухгалтер инспектор
Бухгалтер-счетовод
Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.
Çак адреспе пымала: Шупашкар, Свердлов урамĕ, 27.

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 41. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 2. Тираж 14.500 [illegible]